24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941
АПРЕЛЬ
6
ВЫРСАРНИКУН
81 (5796) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

Пуçламĕш парторганизацисен оргăнĕсене чи шанчăклă çынсене суйлар!

ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени тăрăх, апрельпе май уйăхĕсенче пуçламĕш парторганизацисен ертсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕсем пулса иртмелле. Пирĕн республикăра суйлавсем апрелĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа майăн 10-мĕшне çитиччен, Шупашкар, Улатăр тата Канаш хулисенче майăн 15-мĕшне çитиччен пулса иртеççĕ.

Партин ертсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕсем пулнăранпа çулталăк çитрĕ. Çак вăхăт хушшинче партин Чăваш область организацин пурнăçĕпе ĕçĕсенче пысăк улшăнусем пулчĕç. 1940 çулти февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1941 çулти мартăн 1-мĕшне çитиччен парти членне 1455 çынна, кандидата 1773 çынна илнĕ. Çак вăхăт хушшинчех пуçламĕш парторганизацисем 158 тата кандидат групписем 78 хутшăнчĕç. Партин пуçламĕш организацисем массăпа çирĕп çыхăну тытакан пулчĕç, партиллĕ-политикăллă тата хуçалăхлă ĕçсене ертсе пырассине, коммунистсене воспитани парассине чылай лайăхлатрĕç.

Парти оргăнĕсем çултен пуçласа аяла çитиччен парторганизацисем умĕнче отчет тытасси, вĕсене суйласа лартасси вăл — демократиллĕ централизмăн никĕсĕ пулса тăрать. Демократиллĕ централизм пирĕн большевикла партин организациллĕ строенийĕн ертсе пыракан принципĕ пулать.

Коммунистсен партийĕ хăйĕн ертсе пыракан оргăнĕсен отчечĕсене тата суйлавĕсене ирттерессине яланах пысăк вырăна хунă. Коммунистсем хăйсен руководителĕсене вĕсен отчечĕсене итлени тăрăх, çитменлĕхсене критиклени тăрăх тата ертсе пыракан юлташсене парти оргăнĕсене суйланипе е суйламаннипе тĕрĕслеççĕ. Пуçламĕш парторганизацисенчи отчетпа суйлав пухăвĕсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çӳлте тăнипе, ВКП(б) Центральный Комитечĕн 1939 çулти августăн 29-мĕшĕнчи инструкцине çирĕп пăхăнса ĕçленипе ирттермелле. Отчетпа суйлав пухăвĕсем промышленность, транспорт предприятийĕсенче, колхозсенче, совет учрежденийĕсенче тата вĕренӳ заведенийĕсенче партиллĕ ĕçе малашне вăйлатса пыма май памалла. Кашни пуçламĕш парторганизаци уставра кăтартса панă задачăсене, ВКП(б) XVIII съезчĕн, XVIII партконференцин тата партипе правительствăн ытти решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн мĕнле кĕрешнине тĕрĕслесси отчетпа суйлав пухăвĕсен ĕçĕнче тĕп вырăнта пулмалла.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ çĕнĕ те пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Çак задачăсене ăнăçлăн пурнăçлас пулсан, парти организацийĕсен хăйсен ĕçне промышленность еннелле çавăрмалла, промышленноçпа транспорта ертсе пырассине лайăхлатмалла. Анчах ку вăл социализмла ялхуçалăхне ертсе пырассине вăйсăрлатмаллине пĕлтермест, пачах урăхла, парти организацийĕсен промышленноçпа ялхуçалăхне пĕртан ертсе пырас пулать.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин решенийĕ кашни парторганизацишĕн тата кашни коммунистшăн малашнехи ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешмелли программа пулса тăрать. Çавăнпа та парти оргăнĕсен суйлавĕсене XVIII партконференцин решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе парти организацийĕсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслес, партин облаçри организацийĕ умĕнче тăракан политикăллă тата хуçалăхлă задачăсене пурнăçа кĕртме массăсене мобилизацилес паллăпа ирттермелле.

Чылай пуçламĕш парторганизацисемпе вĕсен руководителĕсем партин XVIII конференцин решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Вĕсем халĕ те завод, фабрика, транспорт, промартель ĕçĕсемшĕн куллен тăрăшма тытăнман, промышленноçпа транспортри пысăк çитменлĕхсене пĕтерессишĕн конкретлă ĕçсем сахал тăваççĕ, ытларах сӳтсе-яваççĕ, решенисем йышăннипе лăпланаççĕ.

XVIII партконференци пулнăранпа вара вăхăт уйăх та çурă ытларах иртрĕ пулсан та, Канашри вагонсем юсакан заводра конференци решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе сахал ĕçсем тунă. Республикăри чи пысăк заводсенчен пĕри пулса тăракан Çĕмĕрлери «Большевик» завод та кăçалхи çулăн пĕрремĕш квартал планне тултарман. Предприятисенче оборудованисемпе туллин усă курмаççĕ, продукци пахалăхĕ çителĕксĕр, цехсене, машинăсене таса тытас тĕлĕшпе пуçарнă ĕçе те нумай предприятисенче вĕçне çитермерĕç.

Отчетпа суйлав пухăвĕсенче критикăпа самокритика вăйлă пулмалла, руководительсене хăйсен ĕçĕсене XVIII партконференци решенийĕсем тăрăх урăхлатса çĕнетме çирĕп кăтарту парса хăвармалла. Фабрикăсемпе заводсенчи парторганизацисенчи коммунистсем партбюро членĕсен, пуçламĕш парторганизаци секретарĕсен ĕçĕсене вĕсем XVIII партконференцин решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн мĕнле кĕрешнине кура хак пама тивĕç. Руководительсен ĕçĕсене хак панă чухне яланах предприяти, колхоз, учреждени, шкул мĕнле ĕçленине, ертсе пыракан оргăна суйланă юлташсем хăйсене шанса панă ĕçсене мĕнле туса пынине асра тытмалла.

Малтан тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларни, çитменлĕхсемпе йăнăшсене хăюллăн уçса палăртмасăр тытса усрани большевиксен ĕçĕнче пулмалла мар. Çавăнпа та парти оргăнĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсенче большевикла критикăпа самокритикăна анлăн сарса ямалла. Критикăпа самокритикăна анлăн сарни тăрăх предприятисен, колхозсен совет учрежденийĕсен ĕçĕсенчи çитменлĕхсене уçса палăртмалла, вĕсен ĕçĕсене малашне лайăхлатма коммунистсене, пĕтĕм ĕççыннисене мобилизацилемелле.

Партин пуçламĕш организацийĕсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсем çуракине тухас умĕн пулса иртеççĕ. Машинно-тракторнăй станцисенчи, колхозсенчи, çавăн пекех ялсенчи территориллĕ пуçламĕш парторганизацисемпе кандидат групписен хисеплĕ задачи — отчетпа суйлав пухăвĕсене çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илесси пулать.

Отчетпа суйлав пухăвĕсенче партиллĕ пропаганда, политикăллă агитаци, коммунистсене большевизмпа хĕçпăшаллантарас, вĕсен производствăри авангардлă рольне ӳстерес ыйтусене çивĕччĕн лартмалла. Тӳрех калас пулать, халĕ чылай пуçламĕш парторганизацисем партиллĕ-политикăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ кадрсене суйласа илсе ĕçе лартас ыйту тăрăх питĕ конкретлă директива пачĕ. Конференци пултаруллă тата пуçаруллă работниксене ертсе пыракан ĕçе хăюллăн лартмаллине, юрăхсăр, вăйсăр, çемçешке работниксене, чĕрĕ ĕçе организацилеме пултарайман сӳпĕлтисене ертсе пырас ĕçре тытмаманнине кăтартрĕ. Партин ертсе пыракан оргăнĕсене суйланă чухне коммунистсен çакна çирĕп асра тытмалла. Чи лайăх, практикăллă ĕçре тĕрĕсленнĕ, Ленин—Сталин парти ĕçне чĕререн парăннă коммунистсене партин ертсе пыракан оргăнĕсене суйламалла.

Иртнĕ суйлавра хăшпĕр районсенче партин пуçламĕш организацисен ертсе пыракан оргăнĕсене тивĕççĕр çынсене суйлани те пулнă. Çакна пула чылай çĕрте парторганизаци секретарĕсем улшăнса тăнă. Республикăра 178 пуçламĕш парторганизаци секретарĕ улшăннă пулсан, Вăрнар, Çĕрпӳ, Пăрачкав тата Етĕрне районĕсенче пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем 50 процент таран улшăннă.

Отчетпа суйлав пухăвĕсене организованно ирттересси ăна малтанах тĕплĕн хатĕрленнинчен килет. Партин ертсе пыракан оргăнĕсен суйлав пухăвĕсене васкаса, хатĕрленмесĕр ирттерни пулмалла мар. Партбюро, пуçламĕш парторганизаци секретарĕн отчечĕсене пур енчен те тĕплĕн çырмалла, пуху пуласси çинчен кашни коммуниста малтанах пĕлтермелле, пуху пулмалли çуртсене, пӳлĕмсене йĕркене кĕртмелле. Коммунистсен активлăхне ӳстерме кирлĕ ĕçсене пурне те тумалла.

Партин пуçламĕш организацисен ертсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕсене большевикла критикăпа самокритикăна анлăн сарнипе ирттерер, ертсе пыракан оргăнсене ленинла-сталинла сăнарлă работниксене суйласа хăварар!

РСФСР 1-мĕш СОЗЫВРИ ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН IV СЕССИЙĔ

1941 çулти апрелĕн 3-мĕшĕнчи ирхи лару дневникĕ

Ирхине 11 сехетре РСФСР Верховный Совечĕн IV Сессийĕн пилĕкмĕш ларăвĕ уçăлать. Председатель сĕтелĕ хушшинче — РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ депутат **А. А. Жданов** тата Председатель Заместителĕсем — **А. Х. Тынчеровпа П. С. Макарова** депутатсем. Ложăсем çинче — Верховный Совет Президиумĕн членĕсем тата Халăх Комиссарĕсем. Председатель пулса ертсе пыраканĕ — депутат **Тынчеров**.

РСФСР 1941 çулти государство бюджечĕ çинчен тунă доклад тăрăх прениссем пыраççĕ. Депутат **Г. П. Громов** пирĕн çĕршывра халăха вĕренес ĕç ӳссе чечекленни çинчен тата физкультурăпа спорт вăйланса пыни çинчен калать.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах депутат Громов Наркомпрос ĕçĕнчи чылай пысăк çитменлĕхсене паллă тăвать: пĕр класрах икшер çул вĕренекенсен хисепĕ чакманпа пĕрех, вĕренекенсем ăлкĕрсе пырасси питех те сахал хăтарнă, вăтам шкултан вĕренсе тухакансен пĕлĕвĕ çителĕксĕр.

— Совет халăхĕ тата уйрăмах çамрăксем, — тет малалла депутат Громов,—физкультурăна юратаççĕ. Профсоюзпа комсомол кросĕсенче, Осоавиахимăн çарти пек йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсенче çитĕннисем, яшăсемпе хĕрачасем 9 миллион çынна яхăн хутшăннă. Физкультура — государствăшăн пысăк вырăн йышăнса тăракан ĕç, унăн çине вырăнти Советсем пысăкрах тимлĕхпе пăхни кирлĕ.

РСФСР Стройматериалсен промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ **И. П. Гвоздарев** юлташ Сессире наркомат ĕçне вăйлăн критиклени — пĕтĕмĕшпех тĕрĕс, тесе йышăнать. Стройматериалсен промышленноçĕ кая юлса пынине пĕтермен-ха. Башкир тата Атăл çинчи Нимĕçсен АСС Республикисенчи, Курск, Челябинск, Ярославль, Чита облаçĕсенчи тата Хабаровск крайĕнчи стройматериалсем туса хатĕрлекен предприятисем уйрăмах çителĕксĕр ĕçленĕ. Наркомат предприятисене начар ертсе пырать, хăй панă приказсене мĕнле пурнăçа кĕртнине контроллемест.

Депутат **П. В. Майоров** Мускава реконструкцилемелли сталинла плана мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен тата столицăри ĕççыннисен культурăллă пурнăçĕ ӳссе пыни çинчен калать. 1940 çулта Мускавра 370 пин тăваткăл метр чухлĕ çĕнĕ хваттерсене ĕçе янă. Çаксем вĕсем — Совет Союзĕнчи чи лайăх архитекторсен проекчĕсем тăрăх тунă çĕнĕ çуртсем. Шкулсен, больницăсен, ача-пăча учрежденийĕсен тата ыттисен çурчĕсене 10 çурт тунă.

Депутат Майоров Хĕрлĕ столицăна реконструкцилес тĕлĕшпе тăвакан ĕçре москвичсене Сталинпа Молотов юлташсем куллен кун пулăшса пыни çинчен каласан, залра тăвăллăн алă çупма пуçлаççĕ.

1941 çулта Мускавра пурăнмалли çуртсен строительствипе коммуналлă строительство калама çук анлăн сарăлса каять. Капитальнăй ĕçсен программи 1940 çулта 1,9 миллиард тенкĕлĕх пулнă пулсан, 1940 çулта вăл 3,5 миллиард тенкĕлĕх пулать. Москвичсем валли 400 пин тăваткăл метр ытла çĕнĕ хваттерсем, 439 магазин, ателье, столовăйсем тата ыттисем тăваççĕ. Вуншар километр тăршшĕ троллейбуспа трамвай линийĕсем хурса тухаççĕ.

РСФСР Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕн ĕçне Сессире критиклени, — тет РСФСР Çăмăл промышленность Халăх Комиссарĕ **А. Г. Зенов** юлташ, — пире наркоматпа предприятисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме пулăшать. Зенов юлташ пысăк тăкаксем çинчен, наркомат предприятийĕсенче чĕртавара, топливăна тата электроэнергине ытлашши нумай расходлани çинчен калать. Штурмовщинăна татăклăнах пĕтермелле, пур предприятисенче те ритмично ĕçлемелле тумалла.

Депутат **И. И. Дунаевский** социализмлă культурăпа искусство çитĕнĕвĕсем çинчен калать.

— Эпир кашни çулах, — тет вăл,— социаллă-культурăллă ĕçсем валли паракан средствăсем ӳссе пынине куратпăр. Çакă вăл паха результатсем парать. Вырăс халăхĕн искусстви пысăк çитĕнӳсем турĕ, вăл хăйĕн пысăк мастерĕсен опычĕсемпе тăванлă халăхсен искусствине пулăшу парать. Пирĕн псатсем, художниксем, писательсем, архитекторсем, композиторсем, артистсем, скульпторсем нумай тата ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Наука, искусство тата изобретени енĕпе калама çук чаплă ĕçсем тунăшăн премисем памалли туни тата çав премисене пани — партипе правительство наукăпа искусство çыннисем çине тимлĕн пăхнине питех те уçăмлăн кăтартса парать. Çак премисене наукăпа искусствăн аслă тусĕн — Иосиф Виссарионович Сталинăн ячĕпе параççĕ.

Оратор сăмахĕсене саламласа, тăвăллăн алă çупаççĕ.

Кинематографи, театр, драматурги ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем пуррине паллă туса, депутат Дунаевский хăйĕн сăмахĕн вĕçĕнче çапла калать:

— Çапла тăвар: искусство пирĕн тăван çĕршывăн хăватне, унăн оборонин тĕрекне малалла çирĕплетсе пыма пулăштăр, вăл совет патриотизмĕн туйăмне аталантарса вăйлатса пытăр, çавăн чухне вара эпир сталинла аслă саманана тивĕçлĕ произведенисем парăпăр.

РСФСР бюджечĕн пĕтĕм расхочĕсен 40 проценчĕ халăха вĕрентес ĕçе каять. РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ **В. П. Потемкин** юлташ çак питех те пысăк средствăсемпе мĕнле усă курни çинчен, ВКП(б) XVIII съезчĕ лартнă задачăна—виççĕмĕш пятилеткă вĕçĕ тĕлне хуласемпе рабочи поселоксенче пурне те 10 çул тата ялсенче тата нациллĕ республикăсенче пурне те 7 çул вĕрентес задачăна мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен каласа парать.

РСФСР Верховный Совечĕн III Сессийĕнче Халăх Комиссариатне средствăсемпе çителĕклĕ рационально усă курманни çинчен, шкулсене йĕркелесе çитерменни çинчен кăтартса панăччĕ. Республикăра 20 çынран сахалрах вĕренекен шкулсем 5.437 шкул тата 20 çынран пуçласа 30 çынна çити вĕренекен шкулсем 6.919 шкул шутланнă. Мурманск, Чита, Новосибирск, Рязань облаçĕсенче икшер-пилĕкшер ача вĕренекен шкулсем те пулнă. Хальхи вăхăтра шкулсене чылай тĕрĕсрех вырнаçтарса тухнă. Çакă вăл 22 пин учительпе лайăхрах усă курма тата расходсен пĕр статьи — ĕçукçи — тăрăх кăçа 97 миллион тенке çити перекетлеме май панă. Шкулсене йĕркелесе пынипе пĕрлех шкулсене паспортизаци тăваççĕ, çакă вăл шкулсен çурчĕсене, оборудованисене, пособисем çителĕклине тата ыттине те тĕплĕн пĕлсе тăма май парать.

Потемкин юлташ вырăнти совет оргăнĕсене халăха вĕрентес тĕлĕшпе начар ĕçленине критиклет тата РСФСР Наркомпросĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине йышăнать. Вĕренекенсем шкулсенчен тухса каяссине тата пĕр класрах икшер çул вĕренессине пĕтермен-ха.

Хальхи вăхăтра вăтам шкулсенчи вĕренӳ планĕсемпе программисене çĕнĕрен пăхса тухаççĕ. Вырăс чĕлхине, ютçĕршывсен чĕлхисене вĕрентес ĕçе тата вĕренекен çамрăксене физкультура енĕпе хатĕрлес ĕçе лайăхлатмалли мероприятисене палăртса хунă. Вăтам шкул валли истори учебникне пичетлесе кăларни чылаях пысăк çитĕнӳ пулса тăрать.

Депутат **Г. Г. Дорофеев** çапла пĕлтерет: сталинла пятилеткăсен çулĕсем хушшинче Башкир АССР бюджечĕ 14 хут ытла ӳснĕ. Башкир республикинче нумай шкулсем, больницăсем, клубсем, вулав çурчĕсем ӳссе ларнă. Республикăра 14 театр, аслă шкулсем пур, интеллигенцин нациллĕ кадрĕсем ӳссе çитĕннĕ.

— Вырăнти промышленноçа пурмайсемпе те сарса пыни, — тет депутат Дорофеев, — хуçасăрлăха тата хуçалăх организацийĕсенче средствăсене тирпейсĕр салатса пĕтерессине татăклăнах пĕтерни — бюджета пурнăça кĕртмелли питех те кирлĕ условисем пулса тăрать. Уйрăмăн илсен çăмăл промышленность наркомачĕн ĕçне лайăхлатмалла, вăл хăйĕн предприятийĕсене халĕ те начар ертсе пырать-ха. РСФСР Наркомфинĕ предприятисен финанс ĕçĕсене çителĕксĕр контроллет. Наркомфин ревизорĕсем вырăнсене çулталăк вĕçĕнче кăна пыраççĕ, чăннипе илсен вара, ĕçсен положенийĕ мĕнле пулнине кăна регистрацилеççĕ, йăнăшсем пуласран тата финанс дисциплинине пăсасран сыхланса тăма пулăшмаççĕ.

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ депутат **И. С. Хохлов** тухса каланă сăмаха пысăк тимлĕхпе итленĕ.

— Республика тăрăх пĕтĕмĕшпе илсен, — тет Хохлов юлташ, — 1940 çулти государство бюджетне тултарнă. Анчах та чылай республикăсемпе облаçсем хăйсене çирĕплетсе панă доходсен планĕсене тултарман. Çаксем вĕсем — Куйбышев, Курск, Новосибирск, Пенза, Рязань, Свердловск, Тамбов, Чкалов, Ярославль облаçĕсемпе ытти облаçсем. Çак облаçсенче совет оргăнĕсем финанс енĕпе начар ĕçлеççĕ, государство средствисем çине иждивенецла пăхас йăлана пĕтермен-ха. Çакнашкал положенине татăклăнах пĕтерес пулать.

Бюджета пурнăçа кĕртесси тӳррĕмех промышленность мĕнле ĕçленинчен килнине паллă туса, Хохлов юлташ çапла калать:

РСФС Республика промышленноçĕ пĕтĕмĕшпе илсен 1940 çул планне тултарнă, хăшпĕр наркоматсем ăна ирттерсе те тултарнă. Анчах та республика промышленноçĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем нумай. РСФСР 1941 çулти Государство бюджечĕ çинчен тунă доклад тăрăх преписенче тухса каланă депутатсем чылай наркоматсен ĕçĕсене тĕрĕс критиклерĕç. Çак критикăран кирлĕ пек практикăллă выводсене туни кирлĕ.

Вăрман промышленноçĕн наркомачĕ хăйĕн предприятийĕсене начар ертсе пырать. Приказсемпе распоряженисем çителĕксĕр мар, вĕсене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесси çук вара, предприятисене конкретлă ертсе пырас ĕçе пачах çителĕксĕр йĕркелесе янă. РСФСР Совнаркомĕ Вăрман промышленноçĕн Халăх Комиссарне Колданов юлташа наркомат ĕçне лайăхлатма кирли çинчен пĕр хут çеç мар асăрхаттарнă. Анчах та ĕç халиччен те лайăхланман.

Стройматериалсен промышленноçĕн наркомачĕ те çителĕксĕр ĕçлет. Вăл 1940 çулти плана тултарман. Стройматериалсен промышленноçĕ енĕпе вырăнти Совет оргăнĕсем те начар ĕçленĕ. 1941 çулта стройматериалсен промышленноçĕ умне питех те ответлă задачăсем лартнă. Çакă вăл унăн ĕçне хăвăрт тата тĕпренех лайăхлатма хушать.

Иртнĕ çулта совхозсен ĕçĕ кăштах лайăхланнă, анчах та совхозсен наркомачĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Унăн системинче тăкаксем пысăк, хуçасăрлăх нумай. Иртнĕ çулта пĕр тракторлă ĕçсенче кăна ытлашши расход туса, 2.230 тонна горючи пĕтернĕ. Наркомат тата Халăх Комиссарĕ Кривошеин юлташ совхозсене çителĕксĕр ертсе пыраççĕ, вĕсен ĕçне çителĕксĕр тĕрĕслеççĕ, часчасах вырăнсенчи чăн-чăн положенине мĕнлине пĕлмеççĕ.

Наркоматсен руководителĕсем çак çитменлĕхсене пурне те шута илме тата вĕсене чи кĕске срокра пĕтерме тивĕçлĕ. Çакă вăл — 1941 çулти государство бюджетне пурнăça кĕртме кирлĕ тĕп условисенчен пĕри.

Эпир, — тет Хохлов юлташ, — тĕнчери йывăр тата сложнăй обстановкăра пурăнатпăр. Пирĕн çĕршыв кĕтмен çĕртен тухса тăма пултаракан мĕнпур йышши ĕçсемпе ăнсăртлăхсене кĕтсе илме хатĕр тăмалла, хăйĕн оборонин хăватне куллен кун çирĕплетсе пымалла. Хамăрăн тăван çĕршывăн оборона хăватне çирĕплетесси вăл — пуринчен малтан социализм строительствин кашни участокĕнче тӳрĕ кăмăлла тата пĕтĕм вăя хурса ĕçлессине пĕлтерет. Партин Центральный Комитечĕпе аслă Сталин ертсе пынипе Совет Союзĕнчи халăхсем, вĕсен тăванлă çемьинче — Россия Федерацийĕнчи халăхсем, малалла та малалла, коммунизмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патнелле пыраççĕ.

Хохлов юлташăн çак сăмахне саламласа, депутатсем нумайччен алă çупаççĕ.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ депутат **Тынчеров** çапла пĕлтерет: РСФСР 1941 çулти Государство бюджечĕ çинчен тунă доклад тăрăх преписене чарса лартасси çинчен сĕнӳ пур. Çак сĕнĕве йышăнаççĕ.

Çакăнпа лару хупăнать. (ТАСС).

Вăрман хатĕрлес, турттарса кăларас тата кирлĕ пункта турттарса пырас тĕлĕшпе обязательнăй йĕркепе панă плана Чăваш республикинчи районсем мĕнле тултарса пынине кăтартакан

СВОДКА

(1941 çулти апрелĕн 1-мĕшне, процентпа)

Районсем	Хатĕрленĕ	Турттарнă	Кирлĕ пункта турттарса пынă
Улатăр	79,2	78,4	67,2
Кувакино	65,4	70,3	98,5
Первомайски	57,1	67,3	83,2
Пăрачкав	111,6	55,5	60,5
Чкаловски	96,5	68,2	—
Комсомольски	85,6	77,8	—
Йĕпреç	85,1	59,4	101,1
Канаш	83,4	69,2	—
Шăхасан	70,7	80,3	—
Вăрмар	101,3	97,0	—
Тăвай	99,9	65,6	—
Вăрнар	105,1	78,7	100,4
Калинински	109,5	106,3	96,7
Красноармейски	105,9	147,6	98,7
Çĕмĕрле	92,9	74,9	99,1
Элĕк	128,9	85,7	69,2
Хĕрлĕ Чутай	105,9	70,7	104,3
Советски	79,1	66,3	83,9
Етĕрне	74,9	80,1	—
Сĕнтĕр	74,4	58,3	—
Сĕнтĕрвăрри	95,9	81,4	—
Шупашкар	112,2	100,6	—
Ишлей	114,4	66,4	—
Октябрьски	96,5	99,1	—
Шăмăршă	85,5	76,6	70,3
Елчĕк	92,8	74,1	—
Пĕтĕмпе	93,6	78,2	97,8

* * *

Çанталăк сасартăк ăшăтса пăрахрĕ. Çуна çулĕ пачах пăсăличчен тата вăрманти юр шĕлкĕшленсе кайиччен шутлă кунсем çеç юлчĕç. Халĕ кашни сехет, кашни кун çавтери хаклă. Кун вăрăм, каçхине те уйăх çути пур. Çавăнпа та вăрман хатĕрлессине, уйрăмах йывăç турттарассине кăнтăрла кăна мар, каçхине те организацилемелле. Пĕр сехет те сая ан кайтăр, кашни сехетрех пысăк тухăçлăхпа ĕçлемелле.

Хăшпĕр районсем Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕ çирĕплетнĕ график тăрăх ĕç тата туртăм вăйĕ çителĕклĕ парса тăрас вырăнне, кашни кунах сахалран та сахалтарах пама пуçларĕç. Уйрăм колхозсем тата колхозниксем кулленхи нормăна татăшах тултарса пырассишĕн тăрăшмаççĕ, ĕç кунĕпе туллин усă курмаççĕ, вăхăта сая яраççĕ. «Автогигант» колхоз членĕсем (Елчĕк р.) государство паракан сĕлĕне лашасене çитерсе пурăнаççĕ, çав вăхăтрах йывăç турттармаççĕ. Кун пек примерсем татах та пур.

Вăрман касса хатĕрлес плана пĕтĕм республика тăрăх 93,6 процент тултарнă пулсан, турттарассине 78,2 процент çеç тултарнă. Çакă вăл вăрманта туртăм вăйĕ çителĕксĕррине кăтартса парать. «Заря» колхозран (Çĕмĕрле районĕ) апрелĕн 31-мĕшĕнче лашапа 14 çын ĕçленĕ, тепĕр кунне вара 3 çын кăна юлнă, ыттисем пĕрикшер кубометр турттарнă та каялла таврăннă. Вăрман турттарас тĕлĕшпе уйрăмăнах Пăрачкав, Йĕпреç, Сĕнтĕр, Ишлей, Тăвай, Чкаловски, Советски т. ыт. районсем кая юлнă. Ку районсене астутарас пулать: çак кунсенче вăрман турттарма туртăм вăйĕ парса тăрас çĕрте тивĕçлĕ улшăнусем пулмасан, плана срокра тултарасси хăрушлăх умне пырса тăма пултарать.

Хальхи вăхăтра вăрман касса хатĕрлес тата турттарас ĕçе никăсанхинчен те оперативлăрах ертсе пымалла. Анчах халĕ унашкал оперативлăх çук-ха. Çак сводкăна Чăваш АССР Наркомлесĕн айĕпне пула нумай кая юлса пичетлетпĕр. Нарком Дубов юлташ приказĕ тăрăх сводкăра апрелĕн 3-мĕшĕнчех туса пĕтермелле пулнă. Анчах Наркомлес предприятийĕсен хăшпĕр руководителĕсем нарком паракан приказсене пурнăçа вăхăтра кĕртсе пыма халĕ те хăнăхса çитмен. Çавăна пулах ĕнтĕ çак сводкăна тăвасси те виçĕ кун кая юлнă. Сводка валли кирлĕ сведенисем тăратма Кирери мехлесопункт начальникĕ Матвеев патне ахаль телеграммăсем те, молни те ярса пăхнă, укçа-тенкĕ тăккаланă. Анчах Матвеев кирлĕ сведенисене тăратман, çапла вара сводка тăвас ĕçе виçĕ кун хушши чăрмантарса тăнă.

Пирĕн партипе правительство кирек мĕнле ĕçе те срокра тума, предприяти руководителĕ паракан приказсене пурнăçа вăхăтра кĕртсе пыма хушаççĕ. Вăрман промышленноçĕнчи хăшпĕр работниксем çакна ăнланса илесшĕн мар. Работниксен ответлăхне, вĕсен хушшинчи государствăллă дисциплинăна хурçă пек çирĕплетме вăхăт ĕнтĕ. Çакна нарком Дубов юлташăн та асра тытас пулать.

ССР Союзĕпе Бельги хушшинче таварçавăрнăшпе тӳлевсем çинчен тунă килĕшӳ

1941 çулти апрелĕн 4-мĕшĕнче Мускавра ССР Союзĕпе Бельги хушшинче таварçавăрнăшпе тӳлевсем çинчен Килĕшӳ тунă. Çак килĕшĕве тăвиччен калаçусем ирттернĕ. Калаçусене пĕр енчен СССР Тулашри Суту-илӳ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ М. С. Степанов юлташ тата Наркомвнешторгăн Суту-илӳ Договорĕсен Отделĕн Начальникĕ Д. Д. Мишустин юлташ, тепĕр енчен — Германин Мускаври посольствин Советникĕ г-н Гильгер тата Бельгири хуçалăх министерствин тулашри суту-илӳпе девизсем тĕлĕшпе ĕçлекен генеральнăй директорĕ г-н Жерар ирттернĕ. (ТАСС).

ВЦСПС XI пленумĕ

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕн XI пленумĕ апрелĕн 4-мĕшĕнче кăнтăрла хăйĕн ĕçĕсене туса пĕтернĕ. Юлашки ларура профсоюз организацийĕсен 1941 çулти халăх хуçалăх планне тултарас тĕлĕшри ĕçĕ çинчен ВЦСПС секретарĕ Н. М. Шверник юлташ тунă доклад тăрăх тата профессиллĕ союзсен 1941 çулти бюджечĕ çинчен ВЦСПС секретарĕ К. И. Николаева юлташ тунă доклад тăрăх постановленисем йышăннă.

(ТАСС).

Атăл çинчи пĕрремĕш караван

Апрелĕн 4-мĕшĕнче, навигацине пĕлтерхинчен 9 кун маларах уçса, 5 пароходпа 9 баржăран тăракан пирвайхи караван Астраханьрен тухать. Çак караван Сталинграда вуншар пин тонна нефть турттарса хăпарать.

Пăр çинчи лагерьте

Мускавпа „СССР Н-169“ самолет хушшинче радиотелефонпа тӳрех çыхăнса калаçни

Апрелĕн 3-мĕшĕнче 81-мĕш параллель çинче анса ларнă «СССР Н-169» самолет юлашки талăксем хушшинче пăрпа пĕрлех темиçе миля малалла юхса кайнă. Апрелĕн 4-мĕшĕнче ирхине «СССР Н-169» самолет лагерĕ çурçĕр широтин 81 градусĕпе 0,4 минутпе тата хĕвелтухăç долготин 178 градусĕпе 20 минути çинче пулнă. Лагерьпе ятти-сыпписĕр çыхăну тытса тăраççĕ. Инçетри широта çинчи сывлăш экспедицийĕн участникĕсем вуннăшĕ те куçса çӳрекен пăр çинче комплекслă научно-исследовательски ĕç тăваççĕ.

Апрелĕн 4-мĕшĕнче çĕрле Мускавпа «СССР Н-169» самолетăн пăр çинчи лагерĕ хушшинче тӳрех радиотелефон тăрăх çыхăнса калаçнă. Çурçĕр тинĕс çулĕн Главнăй Управленийĕн начальникĕ Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ И. Д. Папанин юлташ экспедици участникĕсене чылай ыйтусем панă. Çав ыйтусем çине самолет командирĕ И. И. Черевичный юлташ тата экспедицин научнăй пайĕн руководителĕ Я. С. Либин юлташ ответсем панă.

— Мĕнле вырнаçса лартăр? — ыйтнă И. Д. Папанин.

— Салам, Иван Дмитриевич, — тесе ответ панă лагерьтен. — Лайăх вырнаçрăмăр. Икĕ палаткăра пурăнатпăр. Вĕсенче самаях ăшă.

— Хальхи вăхăтра обстановка тата çанталăк мĕнле?

— Халиччен лагерьте çанталăк уяр пулчĕ. Вăйсăр çил вĕрчĕ. Хальхи вăхăтра çанталăк условийĕсем кăштах начарланаççĕ. Термометр 30—35 градус сивĕ кăтартать.

— Пăр мĕнле?

— Пăр лайăх. Унăн хулăмăшĕ 2 метр. Лаптăкăшĕ — 1×2 километр. Ăна пăр ванчăкĕсен речĕсем хупăрласа тăраççĕ.

— Миçе кун ĕçлеме шутлатăр? Экспедици участникĕсем хăйсене мĕнлерех туяççĕ?

— Пăр çинче 5—6 кун ирттерме шутлатпăр, пурте хăйсене хăйсем лайăх туяççĕ. Сирĕн пата хĕрӳллĕ салам яратпăр! (ТАСС).

—О—

Шахматистсен матч-турнирĕ

ЛЕНИНГРАД, апрелĕн 4-мĕш. (ТАСС). Паян Ботвинник — Керес партийĕ никăшĕ те çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ. Болеславский 17-мĕш ходра Лилиенталя çĕнтернĕ. Çакă вăл — матч-турнирти чи кĕске парти.

Смыслов — Бондаревский партийĕ выляса пĕтмен.

Сакăр тур выляннă хыççăн Ботвинник 6 партирен 4,5 очко, Керес — 8 партирен 4,5 очко, Болеславский — 4 партирен 2,5 очко выляса илнĕ.

Ыран Бондаревскипе Ботвинник, Кереспа Лилиенталь, Смысловпа Болеславский выляççĕ.

Профсоюз организацийӗсем производство ӗҫӗшӗн ответлӑ

Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Совечӗн XI пленумӗнче «Профсоюз организацийӗсен 1941 ҫулти халӑх-хуҫалӑх планне пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшри ӗҫӗ ҫинчен» ВЦСПС секретарӗ Н. М. Шверник юлташ доклад туса пачӗ, профсоюз организацийӗсен ӗҫӗнчи чылай ҫитменлӗхсене тупса палӑртрӗ, ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗ йышӑннӑ решенисенчен профсоюзсем умне тухса тӑракан конкретлӑ задачӑсене кӑтартса пачӗ.

1941 ҫулта пирӗн социализмлӑ ҫӗршыв калама ҫук пысӑк ӗҫсем тӑвать. Кӑҫалхи ҫул пирӗн промышленноҫа, транспорта тата пӗтӗм халӑх хуҫалӑхне малалла чечеклентерсе пымалли ҫулталӑк пулса тӑрать. ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗ ҫирӗплетнӗ халӑх хуҫалӑхӗн планӗ тӑрӑх кӑҫал промышленность продукцийӗ туса кӑларасси, чугун, хурҫӑ, прокат производстви, ҫӗркӑмрӑкӗ, нефть, торф кӑларасси, ҫавӑн пекех ӗҫсыннисене куллен кирлӗ таварсем туса кӑларасси нумай ӳсмелле. Промышленноҫра тата строительствӑра ӗҫ тухӑҫлӑхне 12 процент ӳстермелле, продукцин хӑйне туса кӑларма ларакан хакне 3,7 процент йӳнетмелле. ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗ ырласа ҫирӗплетнӗ халӑх хуҫалӑхӗн 1941 ҫулти планӗ социализмлӑ тӑван ҫӗршывӑн хуҫалӑхне тата оборона хӑватне малалла тӗреклетсе пымалли программа пулса тӑрать.

Халӑх хуҫалӑхӗн планне тултарассишӗн большевикла кӗрешме ӗҫсыннисене мобилизацилесси профсоюз организацийӗсен чи кирлӗ те пысӑк задачи пулса тӑрать. Ҫак ответлӑ задачӑна профсоюз организацийӗсем хӑйсен пӗтӗм ӗҫӗсене Пӗтӗм Союзри XVIII партконференци решенийӗсем тӑрӑх хӑвӑрт урӑхлатса ҫӗнетсен кӑна пурнӑҫа кӗртме пултараҫҫӗ. Ку вӑл профсоюзсен промышленность тата транспорт ӗҫӗсенчи ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлеме тытӑнмаллине пӗлтерет.

Профсоюз организацийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑва, производствӑллӑ канашлусене ертсе пырассине, ҫавӑн пекех ӗҫ укҫине тӗрӗс тӳлемелле тӑвассине лайӑхлатмалла. Социализмлӑ ӑмӑртӑва ертсе пырас ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха. Профсоюзсен фабрикӑсемпе заводсенчи фабзавкомӗсем, вырӑнти комитечӗсем социализмлӑ ӑмӑртӑва канцеляринче хутсем ҫырни тӑрӑх ертсе пыма шутлаҫҫӗ, обязательствӑсем илнисене пуҫтарнипе лӑпланаҫҫӗ, ӑмӑртса ӗҫлекенсен показателӗсене учета илмеҫҫӗ, стахановецсен паха опычӗсене сарассине организацилемеҫҫӗ. Халӗ пирӗн предприятисенче стахановецсен хисепне шута илнипе мухтанакан профработниксем те пур-ха. Ҫав вӑхӑтрах предприяти производство программине тултарманнине, продукци пахалӑхӗ начаррине пӗтерес тӗлӗшпе вӗсем нимӗн те тумаҫҫӗ.

Ҫапла, Ивановӑри кирпӗч заводӗнчи, Етӗрнери ҫу заводӗнчи завкомсен сведенийӗсем тӑрӑх пӗтӗм рабочисенчен ҫурри ытла ударниксемпе стахановецсем шутланнӑ. Анчах та ҫак икӗ заводӗ те иртнӗ ҫулти производствӑллӑ программӑна тултарайман. Йӗпреҫ вӑрманпромхозӗнчи рабочком вӑрманта ӗҫлекенсем хушшинче стахановецсем нумаййипе мухтанма та хирӗҫ пулман. Анчах, вӑрманпромхоз вӑрман касас, турттарас плана пӗрре те йӗркеллӗ тултарса пыман.

Шупашкарти тир-сӑран комбиначӗ, ликеро-водочнӑй завод коллективӗсем ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗ ячӗпе пыракан ӑмӑртӑва хутшӑнса хӑйсем ҫине конкретлӑ обязательствӑсем илнӗччӗ. Профсоюз организацийӗсем малтанах хытӑ шавларӗҫ, обязательствӑсем илнипе мухтанчӗҫ. Анчах та вӗсем ҫак илнӗ обязательствӑсене тултарма рабочисене, инженерно-технически работниксене мобилизацилесе ертсе пыма пултараймарӗҫ.

ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗ йышӑннӑ решенисене пурнӑҫа кӗртсе нумай предприятисем график тӑрӑх ӗҫлесси ҫине куҫрӗҫ. График — вӑл коллектива тӗрӗс-тӗкел ӗҫлеме, кашни рабочие нормӑна тултарма, ӗҫе тӗрӗс организацилеме хушать. Ҫак ӗҫре производствӑллӑ канашлусен пӗлтерӗшӗ питӗ пысӑк. Анчах та халӗ нумай предприятисенче производствӑллӑ канашлусем йӗркеллӗ пулса иртмеҫҫӗ, конкретлӑ ыйтусене лартмаҫҫӗ, панӑ сӗнӳсене пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслемеҫҫӗ. Производство программине тултарас тӗлӗшпе начар мар ӗҫлекен Куславкка комбинатӗнче те производствӑллӑ канашлусем сайра-хутра ҫеҫ пулса иртеҫҫӗ, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетес, оборудованисемпе тӗрӗс усӑ курас, продукци пахалӑхне лайӑхлатас ыйтусене лартса сӳтсе-явмаҫҫӗ, йышӑннӑ решенисене пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслемеҫҫӗ.

Партин Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗ прогулсене йӑлтах пӗтерме кирлине палӑртса хӑварчӗ. СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ 1940 ҫулги июнӗн 26-мӗшӗнче Указ кӑларнӑ хыҫҫӑн предприятисемпе учрежденисенче ӗҫ дисциплини нумай ҫирӗпленчӗ. Ҫапла пулин те, прогул тӑвасси тата ӗҫрен хӑйсен ирӗкӗпе тухса каясси йӑлтах пӗтнӗ тесе шутлани йӑнӑш пулать. Профсоюз организацийӗсен ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетес тӗлӗшпе куллен ӗҫлемелле, прогулсене йӑлтах пӗтерессишӗн кӗрешмелле.

Ӗҫ укҫи тӳлессине тӗрӗс организацилесси ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхмалла. «Ӗҫ укҫи тӗлӗшӗнчен уравниловкӑн ҫӗрӗк практикине вӗҫне ҫитиех пӗтермелле тата ҫакна пурнӑҫа кӗртмелле: ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартас ӗҫре, апла пулсан, пирӗн пӗтӗм халӑх хуҫалӑхне вӑйлатас ӗҫре те сдельщинӑпа премиллӗ система татах та ытларах паха та пысӑк рычагсем пулса тӑмалла» (ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗ Маленков юлташ доклачӗ тӑрӑх йышӑннӑ резолюцирен). Халӗ пирӗн чылай предприятисенче ӗҫ укҫи тӳлес ӗҫре пӑтранусем сахал мар. Пысӑк квалификациллӗ рабочи квалификацисӗр рабочирен ӗҫ укҫи сахал илнине, сдельщина принципне пӑснине кашни предприятирех курма пулать.

Предприятисенче нормӑна тултарса ӗҫлемен рабочисем чылай пур, вӗсене кая юлнисен хисепне кӗртеҫҫӗ. Анчах та фабкомсемпе завкомсем ҫак рабочисем ӗҫ нормине мӗнле сӑлтавсене пула тултарайманнипе интересленмеҫҫӗ, вӗсене нормӑна тултарса ӗҫлекен пулма пулӑшмаҫҫӗ. Профорганизацисен обязанноҫӗ—кашни рабочине нормӑна тултарса ӗҫлекен тӑвасси пулать. Профсоюз организацийӗсен стахановла шкулсене рабочисене нумаййӑн хутшӑнтармалла, кая юлакансене малта пыракансемпе танлашма пулӑшмалла.

Массӑсене ӗҫ ҫине социализмла пӑхма вӗрентесси совет профсоюзӗсен хисеплӗ ӗҫӗ пулса тӑрать. Кашни рабочине халӑх пурлӑхне типтерлӗ тыткалама, япӑхлӑха пӗтерме, дисциплинӑллӑ пулма вӗрентмелле. Рабочисене тухӑҫлӑ ӗҫлеме, халӑх пурлӑхне типтерлӗ тыткалама, культурӑллӑ пулма вӗрентессине профсоюз организацисен хӑйсен тӗп ӗҫӗсенчен пӗри тесе шутламалла. Шупашкарти макарон фабрикинчи пек хӑшпӗр рабочисем инструментсене майлаштарса, тирпейлесе хумасӑрах ӗҫрен тухса кайнине, чӗртаварсене тӑккаласа пӗтернине хирӗҫ профорганизацисен татӑклӑн кӗрешмелле.

ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗн историллӗ решенийӗсем профессиллӗ союзсем умне питех те пысӑк задачӑсем кӑларса тӑратрӗҫ. Профсоюз организацийӗсен хӑйсен пӗтӗм ӗҫне партконференци хушнӑ пек туса пырса промышленноҫпа транспорт ӗҫне лайӑхлатассишӗн нихӑҫанхинчен вӑйлӑн кӗрешмелле.

Рабочисем пурте нормӑна тултараҫҫӗ

Пирӗн цех коллективӗ январьпе февраль уйӑхӗсенче кирлӗ пек ӗҫлеймерӗ, унӑн тӗрлӗрен ҫитменлӗхсем пулчӗҫ. Чи малтан пӑспа электроэнерги ҫителӗклӗ парса тӑманни пысӑк чӑрмавсем кӳчӗ. Сӑмахран, январь уйӑхӗнче кӑна эпир пӑс пулман пирки 7 кун хушши ахаль тӑтӑмӑр.

Март уйӑхӗнче цех ӗҫӗнче чылай улшӑнусем пулса иртрӗҫ. Уйӑх планне эпир 120 процент тултартӑмӑр.

Цех хӑйне панӑ заданине ирттерсе тултарни вӑл—эпир партин XVIII конференцийӗ йышӑннӑ решенисене пурнӑҫлассишӗн вӑя хурса ӗҫленинчен килнӗ. Кашни рабочи, работница партконференци решенийӗсемпе хавхаланса ҫитменлӗхсене пӗтерме мобилизациленнӗ. Кӗске вӑхӑт хушшинчех цехра большевикла йӗрке турӑмӑр—тасамарлӑхпа типтерсӗрлӗхе пӗтертӗмӗр. Ӗҫ кунӗпе, ҫавӑн пекех агрегатсемпе те туллин усӑ курма пуҫланӑ, простой пулассине пӗтернӗ.

Ҫитменлӗхсене пӗтерсе пырас тӗлӗшпе пире уйрӑмӑнах производствӑллӑ канашлусем пулӑшаҫҫӗ. Унта эпир кулленхи ӗҫӗн итогӗсене сӳтсе-яватпӑр. Ҫакӑн пек чухне ӗнтӗ рабочисем хӑйсем хушшинчи ҫитменлӗхсене, кӑлтӑксене уҫса палӑртаҫҫӗ, вӗсене мӗнле майпа пӗтермеллине кӑтартса сӗнӳ параҫҫӗ.

Халӗ пирӗн кашни рабочипе работница хӑйӗн участокӗнчи ӗҫе тӗплӗн туса пырать. Цехра нормӑна тултарса ӗҫлейменнисем пӗрре те ҫук, стахановецсем ҫурри ытла. Стахановка-выпарщицӑсем А. Никитинӑпа М. Кровякова, диффузорщиксем А. Хуснутдинов, П. Степанов юлташсем сменӑри нормӑсене 120—148 процент тултарса пыраҫҫӗ. Коллективра ӗҫ дисциплинине пӑснӑ тӗслӗхсем те пулман.

Цехӑн ҫирӗп график пур. Ӑна эпир йӗркеллӗн тултарса пыратпӑр. Паллах, тунӑ ӗҫсене ҫителӗклӗ теме ҫук-ха. Малашне ӗнтӗ хӑвӑртлӑхсене татах та ӳстерсе пырса хамӑр ӗҫре пысӑк ҫӗнтерӳсем тума шанатпӑр.

П. ЩУКИН.

Ҫӗмӗрлери «Большевик» заводри скумпи цехӗн начальникӗ.

Илнӗ обязательствӑна ӗҫпе ҫирӗплетмеҫҫӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. **(Хамӑр корр.).** Районра промысла артелӗсем 6, инвалидсен артелӗ, крахмал завочӗ тата тимӗр-тӑмӑр отхочӗсенчен тӗрлӗ инструментсемпе хуҫалӑхра кирлӗ таварсем туса кӑларакан мастерской пур. Промысла артелӗсенчи работниксем кӑҫал пурӗ 40 тӗрлӗ ытла ҫӗнӗ продукци туса кӑларма обязательство илнӗ. Лавкасемпе магазинсем тата базарсем тӑрӑх курса ҫӳресен артельсем хӑйсен обязательствине пурнӑҫа кӗртменнине туйса илетӗн.

Район центрӗнче — Красноармейскра кашни вырсарникун базар пулать. Уйрӑм кустарьсем ал вӗҫҫӗн йывӑҫ алтӑр, кункра, уйран ҫӳпҫи, курка сутса ҫӳренине кашни базартах тӗл пулатӑн. Ҫавӑн пек таварсене магазинсемпе лавкасенче тупса илме ҫук вара. Сӑмахран, кӗвенте, витре, мучаларан тӗртсе тунӑ сумка нисҫта та тупса илейместӗн.

Вырӑнти чӗртавартан куллен кирлӗ таварсем тата продовольстви тӑвассине ӳстерессишӗн ҫителӗклӗ ӗҫленӗ пулсан, ҫавӑн пек пулас ҫукчӗ. Халӗ пурӗ 17 тӗрлӗ ҫӗнӗ таварсем кӑна туса кӑлараҫҫӗ. Карайри, Вутланти, Тӗрерти промысла артелӗсен пурӗ 1900 штука урапа туса кӑлармалла. Сӑмах та ҫук, колхозсене урапасем питех те кирлӗ. анчах районра нисҫта та урапа тупса илме май килмест. Ӗҫ начар пынине кашни артель мӗнле те пулин сӑлтавпа витме тӑрӑшать. Карайри промысла артелӗ сӗтел-пукан тавращӗ 10 пин тенкӗлӗх, ҫуна 1000 штука, урапа 1000 штука, пӗкӗ 2 пин, катка пӗр пин штука туса кӑлармалла пулнӑ. Ҫаксене тума йывӑҫ мӗнпурӗ те 126 фестметр кӑна хатӗрленӗ. Вӑл шутран 10 фестметр ҫеҫ кӳрсе килнӗ. Материалсем хатӗрлес тӗлӗшпе ытти артельсенче те ӗҫсем начар.

Ҫӗнӗ Йӗкӗтри артелӗн ҫӑматӑ йӑвалакан производство уҫмалла. Промсоюз пӗр мӑшӑр ҫӑматӑ йӑваланӑшӑн 6 тенкӗ тӳлемелле тунӑ. Вӑл хакпа пирӗн кустарьсем килӗшесшӗн мар, кустарьсене пӗрлештерейместпӗр, теҫҫӗ артельти работниксем. Ӗҫе тытӑничченех ҫавӑн пек калаҫни вӑл, паллах, ҫӑматӑ туса кӑларас ӗҫе хакламаннине пӗлтерет.

«Маяк» артельпе Ҫӗнӗ Йӗкӗтри артелӗн атӑ-пушмак ҫӗлекен мастерскойсем пур. Кунта сӑран отхочӗсем сахал мар пулаҫҫӗ. Ҫак отходран сумка туса кӑларма пулать, ҫак ӗҫе тума тытӑнман.

Район территорийӗ урлӑ Ҫавал тата Шетмӗ шывӗсем юхса иртеҫҫӗ. Вак-тӗвек юханшывсемпе пӗвесем те сахал мар. Вӗсенче пулӑ ӗрчетме питех те лайӑх. Анчах та ҫак паха условисемпе усӑ курма тӑрӑшмаҫҫӗ.

Т. МАЙОРОВ.

Йывӑҫсем лартасси—паха ӗҫ

Пирӗн республикӑн кӑнтӑр пайне лексессӗн, ҫеҫенхирти пекех туйӑнать, кунта катасем мар, уйрӑм йывӑҫсене те курма хӗн. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах Чкаловски, Елчӗк. Комсомольски, Первомайски, Шӑмӑршӑ тата ытти хӑшпӗр районсем палӑрса тӑраҫҫӗ.

Партипе правительство кашни колхозникӑн, рабочин кил вырӑнӗнче садпахчи ӗҫне аталантарса пырасси ҫинчен ятарласа решени йышӑннӑ пулсан та, асӑннӑ районсен руководителӗсем ҫак енӗпе нимех те тумаҫҫӗ.

Кӑҫалхи ҫуркунне кил вырӑнӗсенче улма-ҫырла йывӑҫҫисене лартма пур колхозниксемпе рабочисем те, колхозсем те ӗҫе хӗрӳллӗн тытӑнмалла, урамсемпе ҫулсене йывӑҫсем лартса симӗслетессине те манмалла мар. Ҫавӑн пекех больницӑсенче, шкулсенче, МТС-сенче тата ытти организацисенче те йывӑҫсем лартма тытӑнмалла.

Садсене тата урамсемпе ҫулсем ҫине лартмалли хунавсене—улма, ҫырла, груша, хурлӑхан, хӑмла ҫырли, акаци, вӗрене, ҫӑка, тополь йывӑҫҫисен хунавӗсене тата ҫӗр ҫырли тӗммисене Патӑръелӗнчи (Чкаловски р.) ҫимӗҫ паракан йывӑҫсен питомникӗнчен илме пулать.

Питомникӑн пирӗн условисенче кил вырӑнне лартма ҫакӑн пек лайӑх сортсем пур:

Улма йывӑҫҫи: антоновка, хӗрлӗ анис, тӗссӗр анис, боровинка, штрейфошис, алебастровӑй, грушовка тата Мичурин кӑларнӑ сортсем: бальфлер-китайка, славянка, пепин шафранный, бессемянка т. ыт. те.

Чей ҫырли: ростунья, владимирски, плодороднӑй (Мичурин кӑларнӑ сорт).

Груша: бессемянка, тонковетка, хӗллехи берс (Мичурин кӑларнӑ сорт).

Ҫырласем: Мольбаро хӑмла ҫырлийӗп хунавӗ, неаполитански хурлӑхан, лий хурлӑханӗ, т. ыт. те.

Йывӑҫ лартасси мӗнпур общественноҫӑн пысӑк ӗҫӗ пулмалла. Уйрӑмах ку тӗлӗшпе ҫамрӑксен тӑрӑшса ӗҫлемелле.

О. КРЫСИН.

Халӑхӑн ылттӑн фондне пухассишӗн

Халӑх мӗн авалтанпах хӑйӗн сӑвви-юррисемпе пуян. Халӑх сӑвви-юррисем. вырӑссен аслӑ критикӗ-революционерӗ В. Г. Белинский каларӗш, пурнӑҫа тӗпчесе вӗренес ӗҫре ылттӑн фонд пулса тӑраҫҫӗ. Халӑх творчествине, унӑн ылттӑн фондне пухасси чи пархатарлӑ та чи хисеплӗ ӗҫ пулса тӑни ҫинчен Ленинпа Сталин пӗр хутчен ҫеҫ мар асӑрхаттарса каланӑ.

Вл. Бонч-Бруевич хӑйӗн асаилӗвӗсенче В. И. Ленин фольклор ҫинчен ҫапла каланине илсе кӑтартать: «...в сказках..., которые я перечитал,—есть замечательные места. Вот на что нам нужно было бы обратить внимание наших историков литературы. Это подлинное народное творчество, такое нужное и важное для изучения народной психологии в наши дни». (Вл Бонч-Бруевич—Ленин о поэзии. «Русский фольклор», издание второе, 1938 г., стр. 29).

Аслӑ В. И. Ленин фольклор пирки каланине литературоведсен, литераторсен, ҫавӑн пекех литературӑна юратакансен яланах асра тытма кирли каламасӑрах паллӑ. Фольклорта — халӑх пурнӑҫӗ, халӑх ӗмӗчӗ, халӑх кӗрешӗвӗ, халӑх ҫӗнтерӗвӗ, халӑх ӳсӗмӗ чи ҫутӑ куҫкӗски ҫинчи пек курӑнса тӑрать.

Темиҫе ӗмӗр каялла халӑх хӑйӗн телейлӗ те ирӗклӗ пурнӑҫӗ ҫитесси ҫинчен ӗмӗтленнӗ. Хӑйӗн паттӑрӗсемпе геройӗсем ҫинчен вӑл юмахсем, легендӑсем хывнӑ, мухтав юррисем юрланӑ.

Халӑхӑн ҫӗршер ҫулсем хушши кӗтнӗ ӗмӗчӗ 1917 ҫулти Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци тивлечӗпе пурнӑҫланчӗ Коммунистсен партийӗ тата унӑн ҫулпуҫӗсем — Ленинпа Сталин ертсе пынипе, халӑх, телейлӗ те хаваслӑ пурнӑҫпа пурӑнма тытӑннипе пӗрлех, хӑйӗн творчествӑллӑ пултарулӑхне аталантарма пысӑк право илчӗ Халӑх хушшинчен ҫӗршер, пиншер халлапҫӑсем, юмахҫӑсем, юрӑҫсем, такмакҫӑсем хӑйсен сассисене ҫӗклерӗҫ.

Халӑх сӑвви-юррисем илемлӗ мелодипе, поэзин ахахӗпе пуян; ҫӗршывӑн тулӑх сӑн-сӑпатне, ҫутҫанталӑкӑн иксӗлми илемлӗхне уҫҫӑн кӑтартса параҫҫӗ вӗсем. Ахаль мар ӗнтӗ, пролетари литературин аслӑ классикӗ Алексей Максимович Горький совет писателӗсен Пӗтӗм Союзри пӗрремӗш съездӗнче халӑх творчестви пирки ҫапла каланӑ: «...наиболее глубокие и яркие, художественно-совершенные типы героев созданы фольклором, устным творчеством трудового народа...»

Ҫав съездрах А М. Горький пӗтӗм поэтсемпе писательсене чӗнсе ҫапла каланӑ: «...начало искусства слова в фольклоре. Собирайте ваш фольклор, учитесь на нем, обрабатывайте его. Он очень много дает материалы и вам и нам, поэтам и прозаикам Союза. Чем лучше мы будем знать прошлое, тем легче, тем более глубоко и радостно поймем великое значение творимого нами настоящего». (М. Горький,—«О литературе», стр. 450).

Пирӗн хӑшпӗр поэт-писательсем аслӑ классик-революционерӑн ҫак ылттӑн сӑмахӗсене яланах мар асра тытаҫҫӗ Литература классикӗсем хӑйсен произведенийӗсенче фольклорпа яланах анлӑн усӑ курнӑ. Кашнинех паллӑ: пирӗн тӑван чӑваш литературин классикӗ К. В. Иванов, халӑх творчествин иксӗлми пуянлӑхӗпе туллин усӑ курнине пула, халӑх интересӗпе таччӑн ҫыхӑнса тӑнине пула, халӑх ӑс-хакӑлӗнче нихӑҫан манӑҫми, яланах таса сӑлкуҫӗ пек чӗре вӑйхӑватпа тапса тӑракан вилӗмсӗр произведенисене; «Нарспи» поэмӑна, «Тимӗр тылӑ» юмаха т. ыт. ҫырса хӑварнӑ.

Поэт-орденоносец Николай Иванович Шелепи хӑйӗн произведенийӗнче фольклорпа анлӑн усӑ курать.

Халӑх чунӗ-кӑмӑлӗпе ҫывӑх сӑвӑ-юрӑсем нихӑҫан та хӑйсен хакне ҫухатмаҫҫӗ, вӗсем яланах халӑхпа ҫывӑх тӑраҫҫӗ.

Халӑх хушшинчи халлапсемпе легендӑсем те, юрӑсемпе такмаксем пекех, пурнӑҫри событисене, халӑхӑн шухӑш-кӑмӑлӗсемпе ӗмӗт-шанчӑкӗсене анлӑн ҫутатса параҫҫӗ. Халӑх хушшинчи халлапсемпе легендӑсем ҫинче ӗҫлени, вӗсене юсаса якатни писательсемпе поэтсене творчествӑра хӑйсен сӑн-сӑпатне ҫӗклеме ҫавтери пуян материал парать.

Халӑх халлапӗсемпе тата легендисемпе усӑ курса, чӑваш халӑх поэчӗ С. В. Эльгер хӑйӗн эпосла пысӑк произведенине—«Хӗнхур айӗнче» поэмине тата «Улӑп» халлапне ҫырнӑ.

Ҫавӑн пекех, Яков Ухсайӑн «Телей юмахӗ», Аркадий Эсхелӗн «Елиххан калавӗ», Иван Ивникӑн «Телей ҫулӗ» т. ыт. произведенисем те, халӑх хушшинчи халлапсемпе тата юмахсемпе усӑ курса ҫырнӑскерсем, тӑван литературӑн аталанӑвӗнче паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Писательсемпе поэтсемсӗр пуҫне, фольклор пухас тӗлӗшпе учительсем, колхозниксем активлӑн хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ.

Социализм строительствипе тӑван ҫӗршыв тӗрекне вӑйлатас ӗҫре фольклористсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни питех те паллӑ. Халӑх юрӑҫисемпе такмакҫисем рабочисемпе колхозниксен массине хӑйсен сӑвви-юрри урлӑ коммунистла воспитани парас тӗлӗшпе уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Чӑнчӑн халӑх юрӑҫи, массӑна коммунистла воспитани панипе пӗрлех, хӑйӗн политикӑпа культурӑри пӗлӗвне, художествӑллӑ пултарулӑхне куллен-кун ӳстерсе пыма тӑрӑшать.

Акӑ, колхозник-поэта—Кашкӑр Микулине илер. Вӑл «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» вӗренсе пӗтернӗ. Халӗ вӑл партин Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗ йышӑннӑ решенисене вӗренет. Ҫав вӑхӑтрах вӑл фольклор пухать, сӑвӑсем ҫырать. «Пирӗн хӗвел» сӑввинче вӑл телейлӗ пурнӑҫ туса паракан аслӑ Сталин ҫинчен акӑ мӗнле сӑнласа парать:

Сталин атте, пирӗн атте —
Ҫӗнӗ пурнӑҫ хӗвелӗ.
Сталин атте, пирӗн атте —
Пур халӑхсен телейӗ.

Тавтапуҫ ҫак хӗвеле!
Ӑшшӑн пӑхрӗ вӑл пире.
Тавтапуҫ ҫак хӗвеле!
Пурнӑҫ пачӗ вӑл пире.

Ленин—Сталин партийӗн идейи ҫӗнтерсе пынине, мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫарӑн хӑватне, халӑхсен туслӑхне, колхозлӑ ялӑн пуянлӑхне мухтаса юрлаҫҫӗ пирӗн юрӑҫсемпе такмакҫӑсем. Вӗсем хушшинче поэзин чӑн-чӑн ахахӗсем пур. Тӗслӗхрен:

Ылттӑн пулса ҫӑвӑттӑм,
Кӗмӗл пулса тумлӑттӑм,
Аслӑ Сталин умӗнче
Саркайӑк пек юрлӑттӑм.

Акӑ тата 66 ҫулхи Татьяна Гоголевӑн (Ешне ялӗ, Тутар республики) юррине илер:

Вӑрмана та кайрӑм, ай, каҫ турӑм;
Ҫитмӗл сичӗ ҫырма тӗлпултӑм.
Ҫитмӗл сичӗ ҫырма, ай, пуҫӗнче
Ылттӑн сӑрлӑ юпа эп куртӑм.
Ылттӑн сӑрлӑ юпа, ай, тӑрринче
Ылттӑн пуҫлӑ куккук авӑтать.
Ылттӑн пуҫлӑ куккук авӑтнӑ чух
Колхоз тырри-пулли хумханать.
Колхоз тырри-пулли хумханнипе
Пирӗн пӗтӗм халӑх савӑнать.

Ку юрӑра пирӗн пурнӑҫ сӑн-сӑпачӗ, поэзин ытарайми илемӗ куҫ умне илӗртӳллӗн тухса тӑрать. Пурнӑҫ та, поэзи те кунта хӑйсен тивӗҫлӗ вырӑнӗсене йышӑннӑ. Кун пек тӗслӗхсем вуншар илсе кӑтартма пулать. Вӗсенче кашнинчех—ҫутҫанталӑкӑн илемӗ, ҫӗршывӑн иксӗлми тулӑх сӗткенӗ, халӑхӑн хӑватлӑ вӑй-хӑвачӗ тапса тӑрать.

Халӑхӑн ылттӑн фондне пухасси—чи хисеплӗ ӗҫ. Ӑна пухас ӗҫе Наукӑпа тӗпчев институчӗпе Халӑх Творчестви ҫурчӗн ҫеҫ мар,—мӗнпур литераторсен, литературоведсен, литературӑна юратакансен, колхозниксен анлӑ массин—ҫурин те хутшӑнмалла.

МАКСИМ ЯСТРАН.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Мартӑн 28-мӗшӗнче Чӑваш АССР Совнаркомӗ хуласен благоустройстви мӗнле пулса пыни ҫинчен ӗҫсынни депутачӗсен Шупашкар, Канаш, Ҫӗмӗрле тата Улатӑр хула Совет исполкомӗсен, ҫавнашкалах Чӑваш АССР Наркомхозӗн доклачӗсене итлерӗ. Совнарком ҫакна палӑртрӗ: коммуналлӑ хуҫалӑх валли укҫа-тенкӗ парасси ҫулран-ҫул ӳсет пулсан та хуласен благоустройстви экономика ӳсӗмӗнчен тата культура аталанӑвӗнчен нумай кая юлса пырать.

Урамсемпе площадьсене Шупашкар хулинче 15,9 процент, Улатӑр хулинче—9,5 процент, Канаш хулинче—10,5 процент, Ҫӗмӗрле хулинче—3,6 процент кӑна чулпа, торцовкӑпа тата ытти япаласемпе сарса тухнӑ.

Ҫакӑнта асӑннӑ хула Совет исполкомӗсен отчечӗсем ҫакна кӑтартса параҫҫӗ: хула Совет исполкомӗсем тата вӗсен коммуналлӑ хуҫалӑх заведующийӗсем хуласен благоустройстви тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ, хуласенче тасалӑхпа йӗркелӗх тӑвас енӗпе татӑклӑ мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ. Хуласен благоустройстви валли паракан укҫа-тенкӗпе хула Совет исполкомӗсем тӗрӗс мар усӑ кураҫҫӗ. Сӑмахран, Шупашкар хулинче урамсене чул, торцовка тата ытти япаласем сарса тухассипе сметӑпа пӑхнинчен 20 процент, капитальнӑй ремонт енӗпе икӗ хут ытларах, Ҫӗрпӳ хулин благоустройстви валли пӑхнӑ укҫана пӗтӗмпех пушар деповӗ тунӑ ҫӗре расходланӑ. Ҫакӑн пек фактсем Улатӑрпа Канаш хулисенче те пулнӑ.

Совнарком ҫакна палӑртрӗ: хула Совет исполкомӗсем благоустройство валли паракан укҫапа тӗрлӗрен нумай ӗҫсем тума пӑхнӑ, ҫавӑнпа пысӑк ӗҫсем айккине тӑрса юлнӑ. Ҫакӑ тӗп ҫитменлӗхсенчен пӗри пулса тӑрать.

Хӑшпӗр хуласенче финанс пайӗсен айӑпне пула, благоустройство енӗпе палӑртнӑ мероприятисене пурнӑҫа кӗртме вӑхӑтра укҫа памасӑр чӑрмантарнӑ тӗслӗхсем пулнӑ. Иртнӗ ҫулта Шупашкар хулинчи финанс пайӗ благоустройство валли 84 пин тенкӗ ытларах укҫа паман.

Хуласен благоустройстви тӗлӗшпе 1941 ҫулта туса ирттерме палӑртнӑ мероприятисене пурнӑҫа кӗртме хуласенче япӑх хатӗрленеҫҫӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ ӗҫсынни депутачӗсен хула Совет исполкомӗсене апрелӗн 15-мӗшне техникӑллӑ проектсене, сметӑсене туса ҫитерме, ҫавнашкалах вӗсене ҫирӗплетме тата хулан благоустройстви валли уйӑрнӑ укҫа-тенкӗпе тӗрӗс усӑ курма хушнӑ.

Хуласене таса тата йӗркеллӗ тытса тӑма мероприятисем хатӗрлемелле, исполкомсен тивӗҫлӗ решенийӗсене ӗҫсыннисем патне ҫитермелле.

Ҫавнашкалах Совнарком хула Совет исполкомӗсене апрель уйӑхӗнче килкартисемпе урамсене ӑпӑр-тапӑрсенчен тата тасамарлӑхпа пылчӑкран тасатма, кашни килкартишӗнче ҫӳп-ҫапсем тӑкмалли вырӑнсем тума мерӑсем йышӑнма хушнӑ. Хуласенче ҫурхи вӑхӑтра РСФСР Наркомхозӗн благоустройствӑн Главнӑй управленийӗ хатӗрленӗ программӑна тултарассишӗн кӗрешмелле, урамсене йывӑҫсем лартмалла, хуласенчи ҫӑлсем, кӗперсем, ҫулйӗрсем, тротуарсем, садсемпе парксем ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхмалла. Хулари строительствӑсене план тӑрӑх тумалла, хуласен тулашӗнче ӑпӑр-тапӑрсем тӑкмалли вырӑнсем тата вилнӗ выльӑхсене пытарма масарсем тумалла.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ Наркомхоза Госсанинспекципе пӗрле промышленноҫпа коммуналлӑ предприятисем кӑларакан ҫӳп-ҫапсене тата шыв пухӑнса тӑракан вырӑнсене тасатма мероприятисем хатӗрлеме, ҫавӑн пекех ку тӗлӗшпе хула Совет исполкомӗсене тивӗҫлӗ кӑтартусем пама хушнӑ.

Хула Совет исполкомӗсене вырӑнти актива явӑҫтарнипе пурӑнмалли ҫурт-йӗрсен, килкартисен тата хула благоустройствин сооруженийӗсен обществӑллӑ смотрне организацилеме, смотр материалӗсем тӑрӑх благоустройство тӗлӗшпе конкретлӑ мероприятисем палӑртма хушнӑ.

Сӳтсе-яврӑмӑр...

— Ял Совечӗн XVI сессийӗ уҫӑлнӑ тесе шутлатӑп, — пӗлтерчӗ ура ҫине тӑрса ялсовет исполкомӗн председателӗ Матросов юлташ. — Кун йӗркинче пӗр ыйту: СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ 1941 ҫулти мартӑн 13-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленине пурнӑҫа кӗртмелли мероприятисем ҫинчен сӳтсе-явмалла. Камӑн мӗнле шухӑш пур?

— Дисциплина ҫинчен ыйту лартас пулать, — кӑшкӑрчӗ пӗри. Унтан пурте шавлама пуҫларӗҫ.

— Дисциплина ҫинчен пӗрремӗш ыйтупа сӳтсе-явмалла,—хушрӗ тепри.

— Иккӗмӗш ыйтупа...

Пӗри тепринпе килӗшмест. Кашниех хӑйӗн сӗнӗвӗ тӗрӗс пулнине ҫирӗплетсе пама нумай тӗрлӗ фактсем илсе кӑтартать. Мӗн курӑнать-ха вӗсем калаҫнинчен? Ялсовет сессине ӗнер, 6 сехетре каҫхине пухма палӑртнӑ пулнӑ. Ун ҫинчен пур депутатсене те тата ялти актива пӗлтернӗ, кашни депутат пӗлтерӳ ҫине алӑ пуснӑ. Анчах палӑртнӑ вӑхӑта сессине учительсемпе активистсем кӑна пухӑннӑ. Сессине уҫма май килмен. Икӗ сехет иртсен, тепӗр хут чӗнтернӗ хыҫҫӑн, хӑшпӗр депутатсем пынӑ, ҫапах та сесси уҫма йыш ҫитмен. Вара сессине тепӗр куна хӑварнӑ. Паян та ӗнерхи евӗрлех: 6 сехет тӗлне докладчик, пӗр виҫӗ-тӑватӑ депутат ҫеҫ килчӗҫ. Икӗ сехет иртет, депутатсем пымаҫҫӗ. Ялсовет исполкомӗн председателӗ Матросов иккӗмӗш хут ӗнтӗ исполнительсене чуптарать. Икӗ хут чӗннӗ хыҫҫӑн та депутатсем: Д. Алексеев, Ухьянкина, П. Изенгеев пымарӗҫ. Сесси виҫӗ сехет кая юлса уҫӑлчӗ. Акӑ мӗншӗн кунта дисциплина сӳрӗк пулнӑ пирки хытӑ тарӑхаҫҫӗ.

...Пӗр ҫур сехете яхӑн тавлашнӑ хыҫҫӑн дисциплина ҫинчен иккӗмӗш ыйтупа сӳтсе-явма килӗшрӗҫ. Сесси ӗҫе тытӑнчӗ. Доклад тума сӗтел умне учитель И. Чебуков тухса тӑчӗ. Вӑл хӑйӗн сӑмахне дисциплина сӳрӗк пулни ҫинчен каланипе пуҫларӗ, унтан вара СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ «Ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне тата выльӑхчӗрлӗх продуктивлӑхне ӳстернӗшӗн Чӑваш АСС Республикинчи колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленине ӑнлантарма пуҫларӗ. Мӗн калать-ха докладчик?

— Эсир постановленине пурте вулачӑ пулӗ, — тет вӑл,—аван постановлени. Ҫавӑнпа эпӗ мӗншӗн хушса тӳлени ҫинчен каламастӑп. Ҫавна ҫеҫ калатӑп, аван постановлени, вӑл...

Ҫапах та мӗн ҫинчен каларӗ-ха докладчик? Пурин ҫинчен те калама пуҫларӗ, анчах ним ҫинчен те тӗплӗн каласа памарӗ. Калама та пултарас ҫук, мӗншӗн тесен докладчик колхозри ӗҫсемпе паллашман. Ҫавӑнпа сессине пынисем доклада итлемерӗҫ те.

Доклад пӗтрӗ, ыйтусем пуҫланчӗҫ.

— Звеноводсен ӗҫ условийӗсем мӗнле?

— Бригадирсене мӗншӗн хушса тӳлеҫҫӗ?

— Мӗнле культурӑсем акмалла пулать...

Докладчик Чебуков ахалех пуҫне тытса шутласа ларать. Вӑл ыйтусем ҫине постановлени усӑмлӑн ответлет. Тӗплӗн кӑна вуласа тухмалла пулнӑ ӑна.

— Ҫитет, прени пуҫлас, — илтӗнчӗ сасӑ.

Ҫавӑнтах ялсовет исполкомӗн председателӗ Матросов прени пуҫланни ҫинчен пӗлтерет.

— Кам калаҫать?

— Калӑр хӑвӑртрах, вӑхӑт иртет вӗт!

Никам та шарламасть. Пӳлӗмре чылай вӑхӑт хушши шӑплӑх тӑнӑ хыҫҫӑн ҫеҫ ялсовет исполкомӗн секретарӗ Майоров сӑмах илет. Ун хыҫҫӑн колхоз председателӗ Суранов, унӑн заместителӗ Воробьев тата тепӗр бригадир каларӗҫ. Вара постановленине ырлас, пурнӑҫа кӗртес, тесе решени йышӑнчӗҫ.

Иккӗмӗш ыйту—дисциплина ҫинчен. Шкул директорӗ, учитель, ялсовет исполкомӗн председателӗ—депутатсем халӑх тарҫи пулни, ответлӑх, дисциплинӑна ҫирӗплетме кирли ҫинчен каларӗҫ. Ҫакӑнпа сесси ӗҫне вӗҫлерӗҫ.

Ҫак картинӑна эпир Канаш районӗнчи Сиккасси ял Советӗнче куртӑмӑр. Колхозниксемпе учительсем тата депутатсем хӑйсем каланӑ тӑрӑх, ял Совечӗн сессийӗсем тӑтӑшах ҫавӑн пек иртеҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл депутатсем хӑйсен ответлӑхне туйман пирки пулать.

Депутатсем чылайӗшӗ умра тӑракан задачӑсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе начар ӗҫлеҫҫӗ. Ялсоветра укҫа-тенкӗ пухас, вӑрман хатӗрлес плана тултарасси тата государство умӗнчи чылай обязательствӑсене пурнӑҫласси кая юлса пырать. Ун ҫинчен ялсовет исполкомӗн ларӑвӗнче тата сессинче пӗр хут кӑна мар сӳтсе-явнӑ. Сӑмахран, укҫа-тенкӗ пухас плана тултарасси ҫинчен 12 хут сӳтсе-явнӑ та решени йышӑннӑ. Анчах вӑл решенисене пурнӑҫа кӗртессишӗн тӑрӑшман. Хӑшпӗр депутатсем хушнӑ ӗҫе те пурнӑҫа кӗртмеҫҫӗ. Депутат Маркова юлташӑн культура комиссине ертсе пымалла. Вӑл ӗҫлемест. Ҫавӑн пекех депутат И. Суранов юлташ та ӗҫе хутшӑнмасть.

Ялсовет депутачӗсен актив ҫине таянса ӗҫлемелле. Сиккасси ялсоветӗнче ҫавна курмастпӑр-ха. Ялта актив пысӑк. Анчах вӗсене ӗҫе явӑҫтарман. Иртнӗ вӑхӑтра вӑтам шкулти учительсене, сельпо, почта, больница работникӗсене сессисене чӗннӗ пулнӑ. Юлашки вӑхӑтра вӗсем ӗҫлеме мар, кирлӗ ыйтусене сӳтсе-явнӑ чухне те сессисене ҫӳреме пӑрахнӑ. Мӗншӗн тесен сессине е ларӑва пырсан яланах ик-виҫӗ сехет хушши депутатсем пырасса кӗтсе лармалла.

Депутатсем — халӑх тарҫисем. Вӗсен халӑх шанса панӑ ӗҫе кулленхи ӗҫре пурнӑҫа кӗртсе пымалла.

Канаш. **(Хамӑр корр.).**

Арман хуҫалӑхӗ лайӑхланать

СЕНТЕР. Районри чылай колхозсем арман хуҫалӑхне лайӑхлатасси ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхма пуҫларӗҫ. Уйрӑмӑнах виҫӗмҫул, ҫавӑн пекех пӗлтӗр те нумай ҫӗрте ҫил, шыв арманӗсем ӗҫлемесӗр ларнӑ. Халӗ ӗҫлемесӗр ларакан армансем ҫукпа пӗрех. Кивӗ армансене юсанӑ, вӗсене ӗҫе янӑ.

Кунпа пӗрлех хӑшпӗр колхозсем армансем ҫӗнӗрен туса лартрӗҫ. Мӑн Сӗнтӗр ялсоветӗнчи «Парижская Коммуна» колхоз кӑҫал ҫӗнӗрен кӗрпе арманӗ туса лартрӗ. Халӗ ку арман кашни кунах 4—5 центнер кӗрпе ҫурса кӑларать. Фрунзе ячӗпе тӑракан колхоз та арман хуҫалӑхне ҫӗнетрӗ. Арман иртнӗ ҫулсенче кунне 40—50 пӑт авӑртнӑ пулсан, халӗ 50—60-шар центнер авӑртать.

Ку колхозӑннах ҫӑм тапакан арман пур, кӑҫал кӗрпе арманӗ тума тытӑннӑ. Арман колхоза пысӑк тупӑш парать. Иртнӗ ҫулта виҫӗмҫулхинчен икӗ хут ытларах тупӑш илнӗ. Кӑҫал унӑн тупӑшӗ 10 пин тенкӗ ытла пулмалла.

С. ОРЕХОВ.

Çуракине большевикла кĕтсе илер!

Малта пыракан МТС-ра

Кунта ĕçлекен трактористсем, механиксем, комбайнерсем тата специалистсем иртнĕ çулта тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларман. 1940 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтерсенех тракторсене, молотилкăсене, комбайнсене юсама хастарлăн тытăннă. Кашни бригада хăйĕн тракторĕсене юсанă, мастерскойĕнче трактористсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янă. МТС старший агрономĕ пулнă, иртнĕ çулта МТС директорĕ пулса ĕçлеме лартнă, хăй ĕçне юратакан Петр Осипович Осипов юлташ пĕрмаях трактористсем, механиксем хушшинче пулнă. Старшие механик Ремизов юлташ МТС-ра вунă çул ĕçлет. 5 çул хушши трактористра ĕçленĕ, ун хыççăн вăл разъездной механик, халĕ старший механик пулса ĕçлет. Хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет.

МТС-ра кивĕ детальсене юсас ĕçе организациленĕ Кивĕ детальсене реставраци тăвас плана 172 процент тултарнă. Уй ĕçĕнче малта пыракан бригадăсем кунта та мала тухнă. Антон Миговаров, Григорий Мишаков, Родион Комаров бригадисем машинăсене юсас ĕçе декабрь уйăхĕнчех вĕçленĕ.

Тракторсене юсассине (пĕтĕм МТС тăрăх) февралĕн 15-мĕшне пĕтернĕ. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчен килсе юсанă тракторсен пахалăхне тĕрĕсленĕ. Халĕ бригадăсем. агрегатсем уя тухса кайма хатĕр тăраççĕ.

МТС коллективĕ 1941 çулта плана ытлашшипех, пур маркăллă тракторсем тăрăх та кунран-кунах тултарса пыма татăклă мероприятисем палăртнă. Кăçал тракторсем çинче ĕçе пĕлекен, пысăк опытлă çынсем ĕçлемелле. Тракторсене кашни сменăрах лайăх тĕрĕслемелле, машинăсене вăхăтра юсаса пымалла.

Кăçалтан пуçласа трактор бригадисем хозрасчет çине куçаççĕ. Кашни бригадăрах пур материалсем те, хатĕрсем те пулаççĕ. Бригадăсене пур ĕçсем тăрăх та çирĕп план параççĕ Пур ĕçе те пысăк пахалăхпа туса пынă вăхăтрах горючи тата сĕрмелли япаласене те перекетлемелле. Горючисене учета илес ĕçе лайăх туса пымалла пулать. Иртнĕ çулта 1 гектар ĕçлеме 17,5 килограмм горючи пĕтнĕ. Горючисене 15 процент перекетлесен, МТС 88 пин тенкĕ укçа перекетлет. Пĕр гектара ĕçленин хăйне ларакан хакне 8 процент чакарсан, МТС 41 пин тенкĕ укçа перекетлеме пултарать. Çакна кашни трактористах ăнланать, астăвать. Çакăншăн вĕсем кĕрешеççĕ те ĕнтĕ.

Горючи тата сĕрмелли япаласене турттарнă çĕрте яланлăхах ĕçлеме колхозниксене уйăраççĕ. Вăл колхозниксене МТС директорĕ çирĕплетет Горючисене пичкесенче çеç турттармалла пулать, вĕсен пробкисем пурте тимĕртен тунисем пулаççĕ.

Газогенераторсем валли хĕллех чуркăсем хатĕрленĕ. Вĕсене те çирĕп учета илни, перекетлени кирлĕ. Трактористсен ĕçĕнче те, канура та культурлăх, йĕркелĕх пулмалла. Будкăсем таса, илемлĕ тата унта хаçатсем, кĕнекесем пулччăр.

Вăрнар МТС рабочисен ĕç дисциплинине татах та лайăхрах çирĕплетмелле, машинăсене тирпейлĕ тыткаламалла. Таса мар çӳрекен, тирпейсĕр тракторист машина патне те пыма пултараймасть,—çапла калаççĕ те трактористсем, стахановецсем.

— Пирĕн ĕçре яланах культурлăх, йĕрке пулмалла,—тет 3-мĕш бригадăн бригадирĕ, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитечĕ Пысăк кĕмĕл медальпе наградăланă Григорий Изосимович Мишаков,—машина таса пултăр, вăл сехет пек ĕçлетĕр. Тракторист хăй те таса çӳретĕр. Эпир çавăн пек тăватпăр та ĕнтĕ кăçал.

Евг. ЕФРЕМОВ.

Тракторсене юсас ĕçре

ÇЕМĔРЛЕ. Машинно-тракторнăй станци иртнĕ çулта çителĕксĕр ĕçлерĕ. Уйхир ĕçĕсене вăхăтра пурнăçлаймарĕ, 72 пин тенкĕлĕх горючи, 36 пин тенкĕлĕх запаслă пайсене салатса пĕтернĕ.

Машинно-тракторнăй станцин малтанхи руководителĕсем юр çума пуçличчен машинăсене колхозсенчен илсе килсе пĕтермен: 4 трактор, 3 комбайн, 5 плуг колхоз хирĕсенех ларса юлнă. Çавна пула тракторсене юсама вăхăтра тытăнаймарĕç.

Машинăсене юсас ĕç партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пынă социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн чылай лайăхланчĕ, кулленхи график пурнăçланса пычĕ.

Мартăн 20-мĕш тĕлне МТС 15 сеялка, 8 культиватор, 12 лущильник, 24 плуг юсаса, машинăсене юсас плана пурнăçларĕ. Çавăн пекех тракторсене капитальнăй ремонт тăвас ĕçе вĕçлерĕ.

Поршневой палецсене ЧАССР Наркомземĕ панă наряд тăрăх 12 штука «Главтракторсбытăн» Канашри уйрăмĕнчен илмелле пулнă. Анчах та вăл Çĕмĕрле МТС-не парас вырăнне Канашри машинно-тракторнăй мастерскойне панă.

Хальхи вăхăтра слесарь Гартфель тата тимĕрç Баторшин юлташсем кулленхи нормăсене 106—117 процент таран тултарса пыраççĕ.

МТС горючи хатĕрлес тĕлĕшпе те кăçал пысăк çитĕнӳ турĕ. Мартăн 20-мĕш тĕлне керосин, бензин, автол т. ыт. те çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Çитĕнӳсемпе пĕрлех МТС-ăн çитменлĕхсем те пур-ха. Заправка тумалли инвентарьсем (витре, таз, воронка. ешĕксем, пичкесем) тата инструментсем çитмеççĕ. Çавăн пекех газогенераторнăй тракторсем валли чуркăсене 400 кубометр вырăнне 360 кубометр çеç хатĕрленĕ.

Уйхир ĕçĕсене тума МТС-ăн 22 колхозпа договор тумалла. Паянхи куна 5 колхозпа çеç договор тунă.

План тăрăх комбайнсене июлĕн 1-мĕш тĕлне юсаса пĕтермелле. МТС дирекцийĕ çуракине тухиччен юсаса пĕтерессишĕн кĕрешет. Паянхи куна 9 комбайнран 4 комбайнне юсанă ĕнтĕ.

Гр. ПЕТРОВ.

Ытлашши штатсене чакараççĕ

Етĕрне районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ колхозсенчи ытлашши штатсене чакарасси çинчен йышăннă постановленине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

Колхоз председателĕсен заместителĕсем районра ку таринччен 45 колхозра пулнă. Вĕсем колхоз правленине пырса, ним ĕççĕр аптăраса купĕпех канцелярире ларнă.

Халĕ районра виçĕ пысăк колхозра çеç председателĕн заместителĕсем пур. Çавнашкалах колхозсенче ку таринччен 253 хуралçă ĕçленĕ. Сăмахран, Полянкинори Киров ячĕпе тăракан, Чаканарти «Парижская Коммуна» колхозсенче хуралçăсем 16 çынтан пуçласа 18 çынна çити пулнă. Халĕ ку колхозсенче 2-шер хуралçă çеç хăварнă.

Районĕпе колхозсенче управлени аппаратĕнчи 412 çынна чакарнă. Вăл 44,7 процент пулать. Халĕ вĕсем уйхир бригадисенче, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçсенче ĕçлеççĕ.

Халĕ ытлашши штатсене чакарса хăшпĕр колхозсене çĕнĕрен агрономсем хушса панă. Агрономсем районри 7 колхозра пулаççĕ тата 6 колхоза агротехниксем хушса панă.

Т. ЯРАНДАЙКИН.

Çураки планне çирĕплетрĕç

ÇĔРПӲ. Клим Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта çуракине, уборкăна, ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те вăхăтра ирттернипе, агротехникăллă ĕçсене йĕркеллĕ пурнăçласа пынипе тырпул начар мар туса илнĕ. Кашни гектартан вăтам шутпа 13 центнер, 2-мĕш бригадăри Макаров юлташ уйрăм участокĕсем çинчен 19 центнер пухса кĕнĕ.

Колхоз кăçал татах та вăйлăрах тырпул туса илессишĕн кĕрешет. Вăрлăхсене декабрь уйăхĕнчех сортласа хатĕрлесе çитернĕ. Ялхуçалăх машинисене юсанă.

Колхоз кĕркуннехи тата хĕллехи вăхăтра тумалли агротехникăллă мероприятисене йĕркеллĕ пурнăçласа пычĕ. Кăçал план тăрăх 85 гектар çинче юр тытса юлмалла пулнă. Ăна пĕтĕмĕшпех пурнăçланă. Кĕл 12 центнер пухас вырăнне 16,5 центнер, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 14 центнер пухас вырăнне 16 центнер пухнă, уя 521 тонна тислĕк кăларнă.

Колхоз çураки планне туса хатĕрленĕ, ăна колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе явса çирĕплетнĕ. План тăрăх колхозăн çуракине 7 кунта вĕçлесе çитермелле. Çураки вăхăтĕнче колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе туса пыма кашни бригадăрах вулавçăсем уйăрнă. Вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех протравить туса тата яровизацилесе машинăпа акса хăварма палăртнă. Колхозăн 2 сеялка, вĕсемпе ĕçлеме колхозри стахановецсене уйăрнă. Яровизаци тăвас тĕлĕшпе яровизаторсен курсĕнчен вĕренсе тухнă Гронитов юлташ ĕçлет. Вăрлăхсене протравить тумалли япаласене илсе килнĕ.

Колхозра СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерешĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановленине сӳтсе-явнă хыççăн вăйлă тырпулшăн, ышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешӳ татах та анлăрах сарăлчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем ку тĕлĕшпе хăйсем çине таткăллă обязательствăсем илсе «Сталинцы» колхоза ăмăртăва чĕнчĕç, бригадăсем пĕр-пĕрин хушшинче ăмăрту договорĕсем туса çирĕплетрĕç.

С. ПАВЛОВ.

Минераллă удобренисене хакламаççĕ

Вăрнарта туса кăларакан фосфорит çăнăхĕнче 18 процент таса фосфор шутланать. Фосфорит ӳсен-тăрансем валли кирлĕ япала. Фосфорит çăнăхĕпе çемçетнĕ çĕр çинче кĕрхи тулă, ыраш, сĕлĕ пĕрчисем туллин çитĕнеççĕ. Фосфорит çăнăхĕ—пĕр çул хушши çеç мар, нумай çуллăха усă паракан удобрени. Кĕрхи е çурхи тырăсем акнă çĕре тăксан, çак тырăсем хыççăн клевер аван ӳсет. Çавăн пекех клевер хыççăн акакан культурăсем те лайăх результатсем параççĕ.

Анчах та хăшпĕр колхозсем минераллă удобренисен уссине хакламаççĕ. Акă, Ишлей районĕнчи Тивĕш ялсоветне кĕрекен «Тивĕш» колхоз пĕлтĕр кӳрсе килнĕ удобренисемпе усă курман. 1941 çулта фосфорит çăнăхне 16 центнер кӳрсе килмелле пулнă пулсан, 10 центнер анчах кӳрсе килнĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан тата «Автан» колхозсен 8 центнер кӳрсе килмелле пулнă пулсан, пĕр центнер та кӳрсе килмен.

Минераллă удобренисемпе усă курассине кашни колхозрах кирлĕ пек йĕркелемелле. Кашни колхозăн, бригадăн минераллă удобренисем кӳрсе килма панă плана тултарассишĕн тăрăшса ĕçлемелле.

И. НИКИТИН.

Пирĕн опыт

ШĂХАСАН. Ӳсен-тăрана хамăра кирлĕ пек çитĕнтерме вĕренни—питех те пархатарлă, кирлĕ ĕç. Вăл тырпул тухăçне ӳстерессишĕн, уяр çанталăка хирĕç кĕрешни пулать. Тырпул тухăçне хăпартассишĕн кĕрешмелли нумай майсенчен пĕри вăл—яровизаци.

Çурхи тулă тата ытти тырăсем пирĕн условинче часах пулса çитмеççĕ. Вĕсем пулса çитнĕ вăхăтра шăрăх, вĕри тăрать. Вĕри çилсем тырă пĕрчисене туллин çитĕнме памаççĕ. Çавăнпа та тырă пĕрчисем пĕрĕнсе лараççĕ, тырă тухăçĕ чакать. Çакна пĕтерме пире вăрлăха яровизаци туса акни пулăшать.

Иртнĕ çулта эпир хамăр колхозра—Киров ячĕпе тăракан колхозра—çурхи тулăна, урпана, сĕлле тата çĕрулмине яровизацилесе акрăмăр. Тулă вăрлăхне малтан сортировкăпа тасатрăмăр. Унтан çавра алапа аларăмăр. Вăрлăх шăтассине 98 процент таран çитертĕмĕр. Вăрлăхăн нӳрлĕхĕ—14 процент пулнă. Çак вăрлăха эпир апрелĕн 16-мĕшĕнче амбарта нӳретме тытăнтăмăр. Амбарта ăшă 10—12 градус тăнă. Вăрлăха виçĕ хутчен нӳретнĕ. Малтанхи хутĕнче 10 центнер тулă çине лейкăпа 103 литр шыв сапнă. Иккĕмĕш хутĕнче—102 литр, виççĕмĕшĕнче—каллех 103 литр сапнă.

Акасса сеялкăпа акса хăварнă.

Результат çапла пулнă:

Яровизацилесе акнă вăрлăх	Ахаль акса хăварнă вăрлăх
Апрелĕн 28-мĕшĕнче акнă.	Апрелĕн 28-мĕшĕнче акнă.
Майăн 2-мĕшĕнче шăтса тухнă	Майăн 7-мĕшĕнче шăтса тухнă.
Июнĕн 22—23-мĕшсенче пучаха ларнă.	Июнĕн 30-мĕшĕнче пучаха ларнă.
Пĕр гектартан вăтам шутпа 18,45 центнер илнĕ.	Пĕр гектартан вăтам шутпа 11,17 центнер илнĕ.

Яровизацилесе акни усăллă пулни çак тĕслĕхрен те пит лайăх курăнса тăрать.

Яровизацилемелли вăрлăха малтан кĕлетре, урайне 25 сантиметр хулăмĕш сармалла. Виçĕ хут нӳрлетмелле. Виççĕмĕш хут шыв сапнă чухне, вутпуççи ан пултăр тесен, вăрлăха протравить тумалла. Кашни 10 литр шыв çине 25 грамм формалин ярса ирĕлтерсе, çав шывпа вăрлăха тикĕс нӳрлетмелле. Нӳрлетнĕ хыççăн вăрлăха кĕреплепе пăтраштарас пулать. Ун хыççăн 3—4 сехет хушши витсе тăмалла. Унтан каллех пăтраштармалла. Çапла вара эпир «Лютесценс 062» тулăна талăкра кашни сакăр сехет иртмесрен пĕрер хут—пурĕ виçĕ хут нӳрлетрĕмĕр.

Яровизацилесе акнă хыççăн урпа гектартан 35,5 центнер илтĕмĕр. Çав вăрлăхранах, яровизаци тумасăр акнă çĕрте, гектартан 28 центнер пухса кĕнĕ. Эпир иртнĕ çулти çитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр. Кăçал татах та пысăкрах тухăçлăх илме ĕмĕтленетпĕр. Кăçал эпир хамăр умма çакăн пек задача лартнă: гектартан 200 пăтран кая мар илмелле!

Пирĕн вăрлăхсем хатĕр. Ялхуçалăх машинисене те пĕтĕмпех юсаса çитернĕ. Уя 3982 лав тислĕк, 5030 лав торф кăларнă. 229 гектар çинче юр тытса хăварнă. Кунсăр пуçне тата 35 тонна минераллă удобрени кӳрсе килнĕ. 163 лав фекали. 183 центнер кĕл тата 182 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса кĕнĕ. Çак ĕçсем пире вăйлă тырпулшăн кĕрешме май параççĕ.

И. ИСАЕВ.
Колхозри опытник.

Çĕрулми вăрлăхне çулла лартса тăвар

Çĕрулмине çулла лартсан вăл çанталăк çăмăрлă, сулхăнрах тăнă вăхăтралла çитĕнсе пырать. Çапла вара çĕрулми вăрлăхĕ çĕнелет. Тепĕр çуркунне çак вăрлăхпа лартсан çĕрулми сывă çитĕнет, чир-чĕртен хăрамасть тата унăн тухăçĕ те икĕ хута яхăн ӳсет.

1940 çулта Мускав облаçĕнче çуркунне çĕрулми 1939 çулта çулла лартса тунă вăрлăхпа нумай лартнă пулнă. Акă вĕсен кăтартăвĕсем:

ХУÇАЛĂХСЕМ	Пĕр гектартан çĕрулми тухнă (центнерпа)	
	Çуркунне лартса тунă вăрлăхпа лартни	Çулла лартса тунă вăрлăхпа лартни
1. Ленинский районри «Верный путь» колхоз	150	200
2. «Красный огородник» колхоз	201	231
3. «Правда» колхоз	142	222
4. Пĕрчĕллĕ тырă институчĕн уйĕнче	213	262

Кĕр вăрăм килсен çулла лартнă çĕрулмин тухăçĕ вăл çулнех çуркунне лартнинчен ытларах пулма пултарать. 1940 çулта Мускав облаçĕнче 400 гектар ытларах çĕрулми çулла лартнă пулнă. Çулла лартнă çĕрулми гектартан вăтам шутпа 157,2 центнер тухнă, çуркунне лартнинчен—137,5 центнер кăна илнĕ.

1940 çулта эпир те, Шупашкар районĕнчи Кӳкеçри «Трактор» колхозра, 1,4 гектар çĕрулми çулла лартса пăхрăмăр. Вăл шутран çур гектар июнĕн 12-мĕшĕнче, 0,9 гектар июнĕн 20-мĕшĕнче лартнă. Июнĕн 20-мĕшĕнче лартнă çĕрулми гектартан 169 центнер, июнĕн 12-мĕшĕнче лартни 154 центнер тухрĕ. Çуркунне, майăн 22-мĕшĕнче, лартнă çĕрулми 121 центнер тухрĕ. Çулла лартнă çĕрулми таса, хурт шăтăкĕсем пĕрре те çук. Юнашарах çуркунне лартнă çĕрулми питех те таса мар—хурт шăтăкĕсем нумай.

Халĕ çулла лартса тунă çĕрулми вăрлăхне кăçал çуркунне лартма 24 центнер усратпăр. Ытти вăрлăхсене колхозниксене панă. Çак вăрлăха эпир çуркунне лартса тунă вăрлăхпа юнашарах, пĕр пек çĕр çинех лартатпăр, пĕр пек пăхса ӳстерсе опыт тăватпăр.

Кăçал татах 5 гектар çинче çулла лартса çĕрулми вăрлăхĕ çитĕнтеретпĕр. Эпир пур колхозсене те çĕрулми вăрлăхне çулла—июнĕн 15—20-мĕшĕсенче акса тума сĕнетпĕр. Çĕрулми вăрлăхне яровизаци туса аксан лайăх.

И. ВАСИЛЬЕВ.
Пахча-çимĕç сортлă участокĕн агрономĕ.

Колхоза кĕреççĕ

КАЛИНИНО. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ пирĕн республикăри колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленине ăнлантарасси анлăн сарăлса пырать. Çакăн хыççăн единоличниксем колхоза кĕме тытăнчĕç.

Кăçалхи виçĕ уйăх хушшинче районĕпе 107 хуçалăх колхоза кĕнĕ.

Ф. Егоров.

Манăн юратнă ĕç

ÇĔРПӲ. Эпĕ пурçăн хурчĕ çитĕнтерме иртнĕ çулта тытăнтăм. План тăрăх манăн 54 килограмм кокон памаллаччĕ, ун вырăнне 116 килограмм кокон патăм. Пирвайхи çулах плана икĕ хут ытла тултартăм. Государствăна кокон парса колхоз 2.587 тенкĕ тупăш илчĕ.

Пурçăн хуртне ĕрчетес ĕçе ăнăçлăн вĕреннĕшĕн, государствăна пурçăн коконĕ тăратас плана ытлашшипех тултарнăшăн, Наркомтекстильпромăн Куйбышеври контори мана 150 тенкĕ парса премилерĕ.

Пурçăн хурчĕ ĕрчетес ĕçе эпĕ хамăн çемьене пĕтĕмпех хутшăнтартăм: арăмпа 16 çулхи ывăл ача та çак ĕçе юратсах тытăнчĕç. Ачана, пурçăн тăвас çĕрте пултаруллă ĕçленĕшĕн, государствăна кокон тăратас плана ытлашшипех тултарма пулăшнăшăн кăçал Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникне çирĕплетнĕ.

Пирĕн правительство пурçăн хурчĕсене ĕрчетес ĕçе пит те пысăк хака хурать, вăл ĕçе аталантарса пырассишĕн тăрăшать. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Пурçăн тăвас ĕçе малалла ӳстерсе пымалли мероприятисем çинчен» тата ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ «Пурçăн хурчĕсем ĕрчетесси çинчен» йышăннă постановленисем пурçăн тăвас ĕçе малалла вăйлăн аталантарса пыма лайăх условисем туса параççĕ.

Пурçăн хуртне ĕрчетсе кокон хатĕрлес ĕçе анлăн сарса яма пирĕн республикăра пур условисем те пур. Çамрăк юманлă вырăнсем чылай районсенче çителĕклĕ.

Пурçăн пирĕн промышленноçа питех те кирлĕ. Çавăн пекех вăл оборона промышленноçне те кирлĕ. Çавăнпа та пурçăн хурчĕ ĕрчетес ĕçе ытти колхозсене те куçарса пырас пулать.

Эпĕ кокон тăратас плана кăçал та ытлашшипех тултарма обязательство илтĕм. Ăна эпĕ пурнăçлатăпах.

А. ВАРЛАМОВ.
«Поженары» колхозри пурçăн хурчĕ ĕрчетекенĕ.

Çураки умĕн

Молотов ячĕпе тăракан колхоз (Первомайски р.) кăçал кашни гектартан 28 центнертан кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешет.

Вăйлă тырпул туса илес çĕрте вăрлăха малтанах лайăх хатĕрлесе акни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакна шута илсе çуракинче акмалли вăрлăхсене тĕплĕн хатĕрлесе хутăмăр. Вăрлăхсене йăлтах сортланă. Пăрçана, вире, пăрие, тулăна тата ясмăка алăпа суйласа илнĕ. Вăрлăха кондицине лартнă.

Ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене пурне те тĕплĕн юсаса çитернĕ. Урапасемпе лаша кӳлмелли хатĕрсем юсавлă.

Колхоз минераллă удобренисем турттарнă, хĕллехи агромероприятисен планне пурнăçласа çитернĕ.

Кăçалхи çул пирĕн колхоз 3 гектар помидор, хăяр тата купăста, 5 гектар кишĕрпе чĕкĕнтĕр лартса илесшĕн. Ку ĕçе пурнăçлатпăрах. Шкул çумĕнче вĕренмелли опытлă участок пулать. Шкула вăрлăхпа лаша парса пулăшатпăр.

Çаксем пурте общестăллă хуçалăха вăйлатса, çирĕплетсе пыма, колхозăн укçа-тенкĕ тупăшне ӳстерме, колхозри строительство ĕçне анлăн сарса яма май параççĕ. Тунă çитĕнӳсемпе эпир нихăçан та лăпланса лармастпăр. Вăл çитĕнӳсене малашне те ӳстерсе пырса, колхоза татах та вăйлăрах, çирĕпрех, пуянтарах тăвассишĕн кĕрешетпĕр.

П. СОКОЛОВ.
Колхоз председателĕ.

Н. ДАНИЛОВ.
Естествознани преподавателĕ.

Партипе правительство решенине пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн ĕçлер

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Выранти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановлени выранти промышленноçпа промысла кооперацине аталантарас тĕлĕшпе партипе совет организацийĕсем умне пысăк задачăсем кăларса тăратать. Çавăнпа пĕрлех тата çак постановлени выранти промышленноçпа промкооперацине аталантарма пур условисене те туса парать. Çапла вара выранти промышленноçпа промкооперацине ăнăçлăн аталантарасси партипе совет организацисен руководителĕсем тимлĕн ĕçленинчен килет.

* * *

Постановлени тухнăранпа виçĕ уйăха яхăн иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче республикăри хăшпĕр организацисем постановленине пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕç.

Çĕмĕрлери лесхоз пĕрремĕш кварталри плана тултарса куллен кирлĕ таварсене 80 пин тенкĕлĕх туса кăларчĕ, «Красный Октябрь» артель куллен кирлĕ таварсене туса кăларакан икĕ цех çĕнĕрен организацилерĕ; суту-илӳ организацийĕсем хăйсен предприятийĕсем çумĕнче сыснасем усрас çулталăкри плана 49 процент, пĕрремĕш кварталти плана 128 процент тултарчĕç; Шупашкарти «Промкоопстрой» артель фиолетовăй чернил туса кăларма тытăнчĕ; «Металлист» артель кăмака питлĕхĕсем, лӳшкĕсем туса кăларать; чылай предприятисемпе артельсенче одеялсем, сеткăсем, ача-пăча теттисем, улăмран çыхса тунă шлепкесем т. ыт. нумай япаласене туса кăларас ĕçе çĕнĕрен организациленĕ. Выранти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларассине татах та нумай предприятисемпе артельсенче çĕнĕрен йĕркелесе яма палăртнă. Анчах çак ĕçсене çеç туса ирттерни СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă постановленине çителĕклĕ пурнăçа кĕртсе пынине пĕлтермест-ха. Куллен кирлĕ таварсемпе продовольствине татах ытларах туса кăларма пирĕн Чăваш республикинче калама çук пысăк майсем пуррине шута илес пулсан, вырăнсенчи партипе совет организацийĕсем, Наркомместпром, Наркомпищепром тата промкооперации руководителĕсем СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) тата Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртас пулать. Ун çинчен ВКП(б) Обкомĕн юлашки пленумĕнче пит лайăх кăтартса панă.

Совет Союзĕнчи чылай предприятисен опытне шута илсе, СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) иртнĕ çулта «Хуласенчи тата яллă вырăнсенчи предприятисем çумĕнче пахча-çимĕç тата тĕштырă культурисене акса тăвас тĕлĕшпе подсобнăй хуçалăхсем организацилесси çинчен» постановлени йышăнчĕç. Çак постановлени продовольстви базине туса хурас ĕçре пит пысăк вырăн йышăнса тăмалла пулнă, анчах предприятисем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхсене организацилесси пирĕн Чăваш республикинче пурнăçа начар кĕрсе пырать. Вĕсен ĕçне йĕркелесе яма ялхуçалăх банкĕ паракан кредитпа та çителĕклĕ таран усă курмаççĕ. Уйăрса панă 2.057.200 тенкĕрен 1940 çулта тата 1941 çулти икĕ уйăх çурă хушшинче те 127 800 тенкипе кăна усă курнă, «Дрянное-Долгое» текен торф кăларакан предприятире пачах усă курман. Подсобнăй хуçалăхсенче вăрлăхсем çителĕклĕ мар. Продукци паракан выльăх-чĕрлĕхсене те сахал туянаççĕ, план тăрăх 50 ĕне илмелле пулнă пулсан, халĕ 11 ĕне кăна илнĕ.

Подсобнăй хуçалăхсем организацилес тĕлĕшпе СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă постановленине пурнăçа кĕртменнин сăлтавĕ вăл—предприятисен директорĕсем çак ыйту çине тимсĕррĕн пăхнинче тата вĕсен ĕçне райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем контроллесе тăманнинче.

Çуракине тухиччен вăхăт нумай юлмарĕ. Çак кĕске вăхăт хушшинче подсобнăй хуçалăхсен çуракине тухма пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле.

Куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви туса кăларассине вăйлатас тĕлĕшпе предприятисенче пулакан отходсемпе усă курасси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Предприятисен руководителĕсем отходсем çине ку таринччен те хуçалла пăхма вĕренсе çитменха. Чылай предприятисенче отходсем пит нумай, анчах вĕсемпе куллен кирлĕ таварсене туса кăларас ĕçре тата выльăх-чĕрлĕхе тăрантарнă çĕрте туллин усă курмаççĕ.

Росглавмаслопромăн Чăваш республикинчи контори куллен кирлĕ таварсене туса кăларас тĕлĕшпе кăçал иртнĕ çултинчен лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ, çапах та кунта отходсемпе туллин усă курмаççĕ-ха. Çу завочĕсен работникĕсем отходсемпе хăйсен килĕсенче усракан выльăхсене тăрантарнине те час-часах курма пулать.

Çĕрпӳри райпищекомбинатăн план тăрăх 5 сысна кăна усрамалла, анчах вĕсене те туянман-ха. Пулакан отходсене—пракана харпăрхăй килĕсенче усракан выльăхсене валли илсе кайса пĕтереççĕ. Етĕрнери спиртзаводра вара ĕç татах япăхрах. Çак заводра отхода—пракана нимĕн вырăнне те хумаççĕ. 1940 çулта спиртзавод пракана колхозсене тата рабочисемпе служащисене 1763000 декалитр сутнă, 534000 декалитр Сура шывне тăкнă. 1941 çулта, партипе правительство решени йышăннă хыççăн, 2 миллион литр ытла тăкса шывпа юхтарса янă. Завод выльăх-чĕрлĕхсем усрама панă плана тултарассишĕн тăрăшмасть, çав вăхăтрах выльăхсене çитермелли апата темĕн чухлĕ шывпа юхтарса ярать.

Суту-илӳ организацийĕсем пулă тытас тĕлĕшпе калама çук япăх ĕçлеççĕ. Икĕ уйăх çурă хушшинче пулă мĕнпурĕ те 760 килограмм анчах тытнă; вăл шутра столовăйсен тресчĕ 60 центнер пулă тытас вырăнне 0,40 центнер, Чăвашторг 75 центнер вырăнне 1,7 центнер çеç тытнă. Леспродторг пулă тытас ĕçе пачах организацилемен, Чăвашсоюзăн план тăрăх 100 центнер пулă тытмалла пулнă пулсан, 4,2 центнер çеç тытнă. Чăвашсоюз 4,2 центнер пулă тытассишĕн Куславккара 22 çынтан пулă тытакансен бригадине организациленĕ, бригадăра ĕçлекенсем вара кашни çын пуçне 19 килограмм пулă тытнă. Çапла вара, çав мĕскĕн пулăçсем кашни кун 300-шер грамм пулă тытнă. Çитменнине тата пулăçсен бригадине пĕр Куславкка районĕнче çеç туман вĕт-ха.

Пулă тытас тĕлĕшпе Рыбтрестра та тивĕçлипех ĕçлемеççĕ. Февраль уйăхĕнче Рыбтрестăн 200 центнер пулă тытмалла пулнă пулсан, 176 центнер çеç тытнă. Рыбтрестăн пулă тытмалли плана тултарма пур майсем те пулнă, анчах унăн руководителĕсем вăл ĕçе вăйлатас вырăнне тĕрлĕ сăлтавсемпе витĕнсе пурăннă.

Суту-илӳ организацийĕсем хăйсем пулă тытас тĕлĕшпе япăх ĕçленине пулă кӳллисем çуккипе ăнлантарса пама тăрăшаççĕ. Çак шухăшпа Наркомторгăн руководителĕсем те килĕшеççĕ. Анчах ку шухăша сирсе пăрахас пулать. Пулă тытмалли вырăнсем темĕн чухлех, çапах та суту-илӳ организацийĕсем вăл ĕçе тивĕçлипе туса пыман. Рыбтрестпа суту-илӳ организацийĕсен пулă тытас ĕçе вăйлатас пулать.

Пирĕн республикăра хурт-хăмăр ĕрчетмелли ресурссем пит нумай. Вăл ресурссем 285 пин вĕлле пыл хурчĕ усрама çитеççĕ. Ку питех те пысăк ĕç пулса тăрать. 285 пин вĕлле пыл хурчĕ усранинчен сахалтан та çур миллион пăт пыл илме пулать. Анчах пирĕн республикăра хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç мĕнле пырать-ха? Калас пулать, ку енĕпе эпир питех те начар ĕçлетпĕр. Наркомзем даннăйĕсем тăрăх, пирĕн республикăра пыл хурчĕсем 90 пин вĕлле пур. Вĕсенчен 1939 çулта кашни вĕлле пуçне—29 килограмм, 1940 çулта—14 килограмм пыл пухса илнĕ. Çак цифрăсем пыл хурчĕ ĕрчетме пит пуян ресурссем пур çинчех вĕсемпе япăх усă курни çинчен калаççĕ. Пирĕн республикăри колхозсенчен 77 проценчĕ пыл хурчĕсем пачах усрамаççĕ. Пыл хурчĕ усракан колхозсем те хăйсен утарĕсенче пыл хурчĕсене 15—30 вĕллерен ытла усрамаççĕ.

Анчах хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен районсене те палăртса хăварас пулать. Сăмахран, Кувакино районĕнчи колхозсен утарĕсенче вăтамран илсен 93-шер вĕлле, Çĕмĕрле районĕнче—92-шер вĕлле, Пăрачкав районĕнче—89-шар вĕлле, Улатăр районĕнче—76-шар вĕлле пыл хурчĕ усраççĕ. Комсомольски, Калинински, Тăвай, Вăрнар районĕсенче те пыл хурчĕ утарĕсем кашни колхозрах пур, анчах вĕсенче вĕллесен шучĕ сахал.

Малта пыракан районсен опычĕ пыл хурчĕсене кашни районрах ĕрчетме май пуррине кăтартса парать. Пыл хурчĕ усрама условисем сахал районсенче фацели акас пулать, унта пыл пулакан япала нумай.

Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç çине пирĕн уйрăмăнах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Пыл хурчĕсене кашни колхоз утарĕнчех 150 вĕлле таран усрамалла тăвас пулсан, вĕсем валли оборудованисем, тĕрлĕ инвентарьсем çителĕклĕ хатĕрлес пулать. Анчах хурт-хăмăр утарĕсем валли вĕллесемпе ытти хатĕрсене туса кăларас тĕлĕшпе Древпромсоюз артелĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. 1940 çулта Древпромсоюзăн 1500 вĕлле туса кăлармалла пулнă пулсан, 752 вĕлле кăна туса кăларнă. 1940 çулта план тăрăх 1500 вĕлле çеç туса кăларма пăхнă, çапах та ку таринччен пĕр вĕлле те туса кăларман. Наркомместпром предприятийĕсем те вĕллесем тăвас тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ, кăçал мĕнпурĕ те 123 вĕлле çеç туса кăларнă. Ытти хатĕрсене тăвас тĕлĕшпе вырăнтан та тапранман-ха.

Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе çакăн пек хакламанни питех те пысăк сиен кӳрет. Вăл ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе колхозсен çине тăрса ĕçлемелле, мĕншĕн тесен пыл хурчĕ колхозсен укçа-тенкĕ тупăшне ӳстерет.

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) январĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановленине пурнăçа кĕртессишĕн партипе совет организацийĕсен тата хуçалăх руководителĕсен тимлĕнрех ĕçлес пулать.

НИПЕН.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен активлăхĕ çĕнĕрен вăйланса кайнă. Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Германи бомбардировщикĕсем Англин кăнтăрпа хĕвелтухăç çыранĕнчи вăрçă ĕçĕсемшĕн кирлĕ чылай объектсем çине пырса тапăннă. Ыран апрелĕн 4-мĕш тенĕ чух çĕрле Бристольри порт сооруженийĕсем çине уйрăмах вăйлăн пырса тапăннă. Юнайтед пресс агентствин Бристольри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бристоль çине пырса тапăннă çĕре Германин темиçе 100 самолечĕ хутшăннă.

Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем тинĕс çинчи операцисене малалла туса пыраççĕ. Атлантика океанĕн çурçĕр пайĕнче, тенĕ Германи командованийĕн сводкинче, Германин подводнăй лодкисем противникăн темиçе суднине путарнă. Путарнă суднăсен пĕтĕм тоннажĕ — 88.616 тонна. Шотландин хĕвелтухăç çыранĕ патĕнче Германи бомбардировщикĕсем 2 суднăна путарнă тата тепĕр 2 суднăна сиен кӳнĕ.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 3-мĕшĕнче Англин хĕçпăшаллангарнă парохочĕ Германин пĕр самолетне персе антарнă тата тепĕр икĕ самолетне сиен кӳнĕ. Çав самолетсем Темза тинĕсе юхса тухакан вырăнти Англин суту-илӳ тумалли суднисен караванĕ çине пырса тапăнма хăтланнă пулнă. Ыран апрелĕн 4-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Брест çине пырса тапăннă.

* * *

Албанири фронтсенче противниксем пĕр-пĕрин çине артиллерирен персе тăнă. Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Итали самолечĕсем Корча—Поградец районĕнче Греци войскисен колонни çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англин Грецири сывлăшçар вăйĕсен командованийĕ кăларнă коммюникере каланă тăрăх, Англи авиацийĕ Тепелене çине ăнăçлăн пырса тапăннă.

* * *

Вăтаçĕр тинĕсĕн бассейнĕнче Германи самолечĕсем Англи суднисен караванĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă (Крит утравĕнчен хĕвеланăç енче). Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх караван составĕнчи пĕр пысăк транспорта путарнă пулмалла.

Çурçĕр Африкăра Германипе Итали войскисем малалла наступлени туса пыраççĕ. Апрелĕн 2-мĕшĕнче, тенĕ Германи командованийĕн сводкинче, Германипе Итали чаçĕсем Аджедабине (Ливире) туртса илнĕ тата Зуэтина çитнĕ. Апрелĕн 3-мĕшĕнче Германипе Итали чаçĕсем Геминеса пырса çитнĕ. Англи войскисем Бенгазирен тухса кайнă (Бенгазине англичансем Ливире наступлени тунă вăхăтра февралĕн 7-мĕшĕнче туртса илнĕ пулнă).

Хĕвелтухăç Африкăра, Эритрейăра, Англин бронетанковăй чаçĕсем Асмарăран Массауа патнелле чакакан итальянецсене хăваласа пыраççĕ. Анчах та Эритрейăра англичансен тĕп вăйĕсем противникăн кăнтăр еннелле чакса пыракан войскисене хирĕç кĕрешеççĕ, мĕншĕн тесен çак колоннăна Итали авиацийĕ хӳтлеймест.

Рейтер агентствин Хартумри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: хăшпĕр сведенисем тăрăх, итальянецсем Массауа портĕнчен тухса кайнă та ĕнтĕ. Вĕсем портри мастерскойсене çĕмĕрсе хăварнă тата гаваньре пулнă хĕрĕхе яхăн суднăна путарса хăварнă.

Абиссинире Миессо ятлă чугунçул пунктне туртса илнĕ хыççăн (Аваш юханшывĕ патĕнчен 65 километрта) кăнтăр Африка войскисем итальянецсене вăйлăрах хĕсме пуçланă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англири çынсем хушшинче çапла шутлаççĕ: итальянецсем Аддис-Абебăна — уçă хула тесе пĕлтерессĕ пулмалла, мĕншĕн тесен унта Итали хĕрарăмĕсемпе ачисем нумай пурăнаççĕ.

Апрелĕн 4-мĕш. (ТАСС).

Вăтаçĕр тинĕсри çапăçу çинчен

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, пурте çапла шутлаççĕ: Италин «Литторио» йышши линкорĕ мартăн 28-мĕшĕнче çĕрле путнă. Юлашки хут линкора мартăн 28-мĕшĕнче каçхине курнă. Вăл пĕр еннелле хытă тайăлса пынă. Линкорăн хыçалти пайĕ шыва путса пынă, çакна пула карапăн сăмси шыв айĕнчен пĕтĕмĕшпе пекех каçăрăлса тухнă пулнă.

«Таймс» хаçатăн Афины хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Италин шыва путнă «Цара» тата «Фиуме» ятлă крейсерĕсемпе «Витторио Алфиери» ятлă эсминецĕ çинчен çăлăнса юлнă итальянец-моряксем корреспондента çапла каласа панă: «Çав карапсене путарни — пачах кĕтмен катастрофа пулнă. Англичансем атака тума пуçланă вăхăтра нумай матроссем карапсен шалти пӳлĕмĕсенче пулнă, мĕн пулса иртнине пĕлменпе пĕрех. «Фиуме» çинчи наводчик пулнă çамрăк матрос каласа панă тăрăх, Англи карапĕсен прожекторĕсем çутатнине курнă матроссем: ку вăл Итали крейсерĕсен тепĕр отрячĕ, тесе шухăшланă. Англи карапĕсем хăйсен прожекторĕсемпе Итали карапĕсене çутатсанах «Фиуме» çине торпеда пырса лекнĕ. Торпеда çурăлса кайнипе карап çинчи моряксен чылаях пысăк пайĕ вилнĕ тата аманнă. «Фиуме» крейсер çийĕнчех тайăлса кайнă, унăн орудийĕсем стройран тухнă. Торпеда çурăлнă хыççăн 10 минутăран «Фиуме» путнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Александрири тинĕс-çар çыннисем çапла шутлаççĕ: Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнче пулса иртнĕ юлашки çапăçу вăхăтĕнче Италин пĕр линкорĕ, ултă крейсер тата ултă эсминец путнă.

Белград, Загреб тата Любляны хулисене— уçă хуласем тесе пĕлтернĕ

БЕЛГРАД, апрелĕн 4-мĕш. (ТАСС). Югославири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: «Пире çакăн çинчен официальнăй йĕркепех пĕлтерме полномочи панă: Королевство правительстви хальхи обстановкăна кура йышăнакан чылай мерăсем хушшинче правительство çапла йышăннă: пирĕн государство вăрçа хутшăнса каяс пулсан, Белград, Загреб тата Любляны хулисене — уçă хуласем, хӳтлĕхсĕр хуласем, тесе пĕлтерессĕ. Королевство правительстви мире сыхлас тĕлĕшпе тăвакан ĕçсем кĕтнĕ результатсем памасан тата вăрçă тухас пулсан, ун çинчен королевство правительстви интересленекен государствăсене — вăрçакан государствăсене ялăнхи пек йĕркепе пĕлтерет».

США Германипе Итали протесчĕсене йышăнман

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 4-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германипе Итали США-ри парохочĕсене конфискациленĕ пирки çав çĕршывсем панă протестсене США правительстви йышăнман.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

(Мартăн 27-мĕшпе апрелĕн 4-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Юлашки вăхăтра вăрçă ĕçĕсен центрĕ — Цзянси провинцийĕн çурçĕр пайĕ пулса тăрать. Çапăçусем пуринчен ытларах Наньчан патĕнчен хĕвеланăç енче пулса пынă. Март уйăхĕн варринчех çак районра Японин 60 пин салтакĕ, авиаципе танксем пулăшнипе, наступлени тума пуçланă. Çак наступленине вĕсем Наньчан умне Китай войскисем енчен тухса тăнă хăрушлăха сирсе ярас шутпа пуçланă. Япони командованийĕ калама çук хăвăрт çапса хуçмалли методпа усă курма хăтланнă, анчах та наступлени ăнăçлă пулман. Наступленин пирвайхи талхăрĕнче Япони войскисем стратеги тĕлĕшĕнчен паха чылай пунктсене, вăл шутрах Фынсинь, Гаоань тата Шангао хулисене туртса илнĕ. Япони войскисене малалла кайма чарса лартнă. Наступление 3 колоннăпа туса пынă: вĕсенчен 2 колоннине пысăк çухатусем кӳнĕ, мартăн 27-мĕшĕнчен пуçласа каялла чакма пуçланă, нумай хĕçпăшал пăрахса хăварнă. Çак операцисене ертсе пырас ĕçе Японин Китайри войскисен командующийĕ генерал Хата хутшăнса ĕçленĕ.

Контрнаступлени пуçланă хыççăн мартăн 30-мĕш тĕлне Китай войскисем Шангао, Гаоань, Фынсинь хулисене тата ытти чылай пунктсене каялла туртса илнĕ. Юлашки кунсенче çак районра вăрçă ĕçĕсем кăштах лăпланнă. Çурçĕр Китайра, Гуандун провинцийĕн çурçĕр-хĕвеланăç çыранĕнче тата Ханхай заливĕн районĕнче пысăк мар çапăçусем пыраççĕ. Çак эрне пуçламĕшĕнче японецсем Цзеши районĕнче (Гонконгран çурçĕр хĕвелтухăç еннелле 150 километрта) десант антарса хăварнă. Луфын хулине туртса илнĕ хыççăн, Япони войскисем малалла, çурçĕр еннелле куçса пыраççĕ.

Çурçĕр Китайра Суйюань провинцийĕнче, Баотоу хулинчен кăнтăр енче çапăçусем пынă. Çапăçусенче пĕрре китаецсем, тепре японецсем çĕнтернĕ. Çавăн пекех Шаньси провинцийĕн кăнтăр пайĕнче те çапăçусем пыраççĕ. Датун—Пучжоу чугунçулĕн кăнтăр участокĕн зонинче кĕрешекен партизансен отрячĕсем Японин çар поезчĕсене йĕркеллĕ çӳреме чăрмантараççĕ.

Апрелĕн 4-мĕш. (ТАСС).

Бардоши — Венгри премьер-министрĕ

БУДАПЕШТ, апрелĕн 4-мĕш. (ТАСС). Венгрири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: Венгри ютçĕршыв ĕçĕсен министрне Бардошине Венгри правительствин премьер-министрĕ пулма уйăрса лартнă. Бардоши ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн обязанноçĕсене те туса пырать. Правительствăн ытти членĕсем хăйсен вырăнĕсенчех юлнă.

КĔСКЕН

- Рузвельт çапла пĕлтернĕ: çывăх вăхăтрах Грецине 75 миллиметрлă темиçе оруди тата ытти тĕрлĕ вооружени кăларса яраççĕ.

- Перу государствин крейсерĕ Германин Перуран тивĕçлĕ решени илмесĕр тухса кайма хăтланнă «Лейпциг» тата «Монсеррате» ятлă парохочĕсене тытса чарас тесе артиллерирен 5 хут пенĕ. Çакăн хыççăн Германи командисем хăйсен парохочĕсене вут чĕртсе çунтарса янă.

▲ Румынин финанс министерстви распоряжени панă тăрăх, апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа туянакан таварсем çине хуракан налог 2 процентран 4 процента çити ӳсет. Бензинпа газолин çине хуракан налог та ӳсет.

▲ Итали правительстви кăларнă декрет тăрăх хăшпĕр шкулсенче ютçĕршыв чĕлхисене вĕрентме чарăнаççĕ.

Паян комсомолецсен гимнастикăллă ăмăртăвĕсем пуçланаççĕ

Паян комсомолецсен массăллă гимнастикăллă ăмăртăвĕсем пуçланаççĕ. Комсомол тата пĕтĕм совет çамрăкĕсен пурнăçĕнче паян пуçланакан ăмăртусем пысăк вырăн йышăнаççĕ, вĕсем çамрăксене çарпа физкультура ĕçне йышлăн явăçтарас çĕрте тата тепĕр пысăк çĕнĕ утăм туни пулса тăраççĕ.

Комсомолецсен Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă ятпа пулса иртнĕ йĕлтĕрлĕ кросĕн чаплă итогĕсене пурте астăваççĕ. Совет Союзĕнче вăл кроса 6 миллион çамрăк ытла хутшăннă. Йĕлтĕр спортне çамрăксем кăçалхи пек йышлăн хутшăнни нихăçан та пулман. Анчах, комсомолецсен кросне ирттерни вăл комсомол организацисенче физкультурăпа çар ĕçне урăхлатса çĕнетес тĕлĕшпе малтанлăха тунă ĕç çеç пулса тăрать.

Комсомол умĕнче çĕнĕ тата пысăк задача тăрать, вăл—кросс результачĕсене çирĕплетсе, физкультура ĕçне çамрăксем хушшинче татах та анлăнрах сарса пырасси пулать. Комсомолецсен гимнастикăллă ăмăртăвĕсем çак задачăна пурнăçа кĕртес, комсомол организацийĕ умĕнче физкультура енĕпе тумалли ĕçсене пурнăçа кĕртес çĕрте пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Физически воспитанин системинче гимнастика тĕп вырăн йышăнса тăрать. Гимнастика туни кашни çыннах питĕ те кирлине Ленинпа Сталин пĕр хутчен мар кăтартса панă. Сталин юлташ çирĕп сывлăхлă, хăюллă çамрăксен ăрăвне вĕрентсе устерессишĕн куллен тăрăшать.

Гимнастика—çамрăксене тӳсĕмлĕ, хăюллă пулма хăнăхтарса пырать. Вăл çынăн организмне çирĕплетет, унăн ĕçри пултарулăхне ӳстерет, дисциплинăллă пулма хăнăхтарса пырать. Çаксем ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн пулас боецĕсене питĕ те кирлĕ япаласем пулса тăраççĕ.

Гимнастикăллă ăмăртусен тепĕр тĕп тĕлллевĕ вăл—ГТО комплексĕн гимнастика нормине массăллăн парасси, гимнастикăна çамрăксен кулленхи йăлине кĕртесси пулса тăрать.

Комсомол организацийĕсем чылайĕшĕ ку тĕлĕшпе аван ĕçлесе пыраççĕ. Шупашкарти акушеркăсен шкулĕнчи организаци ăмăртăва лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илет. Унта вĕренекенсенчен 19 группа тата преподавательсенчен пĕр группа тунă. Группăсенче кашни кунах тренировкăсем ирттереççĕ. Вĕсем пурте гимнастикăллă ăмăртăва хутшăнма хатĕрленсе çитнĕ. Спорт залĕ валли кирлĕ оборудованисем туяннă. Шкул çуртне плакатсемпе, лозунгсемпе илемлетнĕ. Гимнастикăллă ăмăрту пуçланнă ятпа ĕнер вĕсем физкультура вечерĕ туса ирттернĕ. Çавăн пекех, Етĕрнери педучилищĕри комсомол организацийĕ те ăмăртăва лайăх хатĕрленсе пырать. Ялти комсомолецсене пулăшас енĕпе те педучилищĕри организаци паха ĕçсем тунă. Унти физкультурниксем ялсенче пулса çамрăксене физкультура упражненийĕсемпе паллаштарнă, вечерсем туса калаçусем ирттернĕ т. ыт.

Çаксемпе пĕрлех ăмăртăва хатĕрленсе ирттерес çĕрте пысăк çитменлĕхсем, туса çитереймен ĕçсем пур-ха. Комсомолăн хăшпĕр организацийĕсем ку ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Комсомол райкомĕсем пуçламĕш организацисене конкретлă ертсе пырас вырăнне, усăсăр канашлусем пухса пуш сăмах çапаççĕ. Çапла вара вĕсем вăхăта ахаль ирттереççĕ.

ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕ ăмăртăва хатĕрленес çĕрте предприятисенчи тата учреждениссенчи комсомол организацисенче сахал ĕçлет. Хула комитетĕнче ĕçлекенсем тата физкультурăпа çарĕç комисси членĕсен предприятисенче сахал пулаççĕ, сахал пулăшаççĕ. ВЛКСМ обкомĕ те колхозри, производствăри комсомолецсене ăмăртăва явăçтарас ыйту çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмасть. «Сирĕн предприятипе ĕçлеме пирĕн вăхăт çук», теççĕ ВЛКСМ обкомĕнчи хăшпĕр ответлă работниксем.

Комсомол организацийĕсен пĕр куна сая ямасăр пĕтĕм вăя комсомолецсене ăмăртăва йышлăн явăçтарса, ăна ăнăçлăн ирттерес çĕре хурса ĕçлемелле. Ăмăртусем ирттермелли график туса ăна пурнăçа çирĕппĕн кĕртсе пымалла, спорт залĕсемпе тĕплĕн усă курмалла.

Участниксен çирĕп дисциплина пулмалла. Судья хушнине кашни участникăн тĕрĕс тата хăвăрт пурнăçламалла.

Комсомол организацийĕсен ăмăртăва лайăх ирттерессишĕн пĕр-пĕрин хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла.

Апрелĕн 6-мĕш—гимнастикăллă ăмăрту пуçланнă кун—çамрăксен массăллă спорт уявĕ пулса тăтăр. Ăмăртăва ăнăçлăн вĕçлени тăван çĕршыва Майăн 1-мĕш ячĕпе панă пысăк парне пулса тăрать.

Районсенчен пĕлтереççĕ

КАНАШ, апрелĕн 5-мĕш. (Телефонпа). Районĕпе пурĕ 183 группа тунă. Вĕсенчен чылайĕшĕ гимнастикăллă ăмăртусене хутшăнма хатĕрленсе çитнĕ. Ыран ăмăртусене 200 çын хутшăнать. Судьясен коллегине тунă.

Сиккассинчи тата 29-мĕш номерлĕ вăтам шкулти группăсем районра чи лайăх группăсем пулса тăраççĕ. Вăл группăсенче тренировка занятийĕсене лайăх ирттернĕ.

Вагонсем юсакан заводри комсомол организацийĕ гимнастикăллă ăмăртăва хатĕрленсе пынă май физкультура ĕçне чылай аванлатнă. Комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросне пачах хутшăнмарĕ пулсан, халь вăл гимнастикăллă ăмăртăва хутшăнма хатĕрленет.

Ăмăртăва начар хатĕрленекен организацисенчен пĕри — чугунçул çинчи организаци пулса тăрать. Унта тренировка тĕлĕшпе пурĕ те икĕ занятиçеç ирттернĕ. Çавăн пекех колхозсенчи организацисенче те ку ĕç çителĕксĕр пырать.

* * *

СЕНТЕРВĂРРИ, апрелĕн 5-мĕш. (Телефонпа). Гимнастикăллă ăмăртусем пуçланнă ятпа паян хулара пилĕк çĕрте тата 7 ялта физкультура вечерĕсем пулса иртеççĕ.

Ыран 350 çын ăмăртăва хутшăнать. Аначкинăри тата «Портной» артельри комсомол организацисем те ăмăртăва хутшăнма хатĕрленсе çитнĕ. Районĕпе 97 группа организациленĕ.

60 пин çĕнĕ рабочи

Июнь уйăхĕн пуçламăшĕнче çĕркăмрăк промышленноçĕн шахтисемпе предприятийĕсене 60 пин çамрăк рабочине яраççĕ. Вĕсем — фабрикăпа завод ĕçне вĕренмелли шкулсенчен вĕренсе тухнă рабочисем.

Альгешри «Паха тĕрĕ» артельте ĕçлекен ученик Владимир Тарасов çип арлать.

М. Антонов фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Çамрăксен вечерĕ

ЕТĔРНЕ. ВЛКСМ райкомĕ пуçарнипе Чурпай колхозĕн клубĕнче çамрăксен физкультура вечерĕ пулса иртрĕ. Вăл вечер комсомолецсен апрелĕн 6-мĕшĕнче пуçланакан гимнастикăллă ăмăртăвĕ ячĕпе пулнă.

Етĕрнери педучилищĕра тата вăтам шкулта вĕренекенсем колхоз çамрăкĕсене гимнастикăллă упражненисемпе паллаштарчĕç.

И. Тимонин.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме кивçен укçа параççĕ

Пирĕн республикăри колхозсене кăçалхи иккĕмĕш кварталта ялхуçалăх банкĕ урлă 1.550 пин тенкĕ укçа кивçен пама палăртнă. Çак укçапа колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре усă кураççĕ. Фермăсем валли выльăхсем илме 600 пин тенкĕ, выльăхсене усрамалли витесем тума 100 пин тенкĕ памалла тунă. Çавăн пекех тымар-çимĕçсем, курăксем акма вĕсен вăрлăхĕсене илме те кивçен укçа параççĕ.

Армансем, тырпул усрамалли амбарсем тума тата ялхуçалăх машинисем илме 150 пин тенкĕ, электростанцисем тума 50 пин тенкĕ, пахча-çимĕçсем лартса тăвас ĕç валли 50 пин тенкĕ кивçен параççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Правление Сюктерской леспромартели
ПРЕДЛАГАЕТ
всем организациям, колхозам и частным лицам,
имеющим на Сюктерском лесозаводе лес и пиломатериал, убрать таковые с территории завода до 11/IV—41 г.

По истечении этого срока весь круглый лес и пиломатериал будет реализован как бесхозяйственный лесопиломатериал.

Правление Сюктерской леспромартели.

КАЗАНСКИЙ
ФИНАНСОВО-ЭКОНОМИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ
ИМЕНИ КУЙБЫШЕВА
ОБ'ЯВЛЯЕТ ПРИЕМ СТУДЕНТОВ НА 1941—42 УЧЕБНЫЙ ГОД.

Институт готовит высококвалифицированных экономистов-финансистов для работы в финансовых органах и спецбанках (Промбанк, Комбанк, Торгбанк и Сельхозбанк).

Все поступающие подвергаются приемным экзаменам по математике, географии, истории народов СССР, русскому языку и литературе.

Отличники зачисляются без экзаменов.

Прием заявлений производится с 20 июня по 31 июля.

Приемные экзамены с 1 по 20 августа.

Студенты обеспечиваются общежитиями.

При институте имеется столовая, радиоузел и звуковое кино.

На государственную стипендию зачисляются отличники средней школы и лица, выдержавшие 3 приемных экзамена на отлично и один—на хорошо.

С заявлениями и справками обращайтесь по адресу: Казань, ул. Карла Маркса, д. № 43, тел. № 1—95.

Подробный справочник высылается по первому требованию.

ДИРЕКЦИЯ.

ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНЫЙ БАЛАНС

Артели „Кооператор" системы Чувашпромсоюза на 1 января 1941 г. (в тыс. руб.)

АКТИВ	Сумма		ПАССИВ	Сумма	
Наименование статей баланса	На 1-ое января 1940 г.	На 1-ое января 1941 г.	Наименование статей баланса	На 1-ое января 1940 г.	На 1-ое января 1941 г.
Основные средства	97,5	96,1	Фонды и резервы	147,4	153,3
Расходы за счет будущих периодов	—	2,7	Регулирующие статьи	1,1	0,2
Отвлеченные средства	13,3	23,4	Долгосрочные кредиты	108,3	163,5
Убытки отчетного года	—	39,9	Расчеты (кредиторы)	75,1	65,6
Предметы, не относимые к основным средствам	24,4	24,4	Краткосрочные кредиты Госбанка	42,8	—
Сырье, материалы и топл.	43,3	43,3	Прибыль отчетного года	46,6	—
Производство	51,6	37,7	Прибыль прошлых лет	3,7	—
Готовая продукция и товары	67,5	64,7			
Пред. выдел. для реализации в порядке ликвидации основн. средств	—	0,6			
Товары отгруж. и вып. работы	69,5	10,2			
Денежные средства	17,3	2,5			
Расчеты (дебиторы)	40,6	37,1			
БАЛАНС	425,0	382,6	БАЛАНС	425,0	382,6

Результаты хозяйственной деятельности

Убытки			Прибыли		
Убытки от реализации	—	4,6	Доходы от реализации	82,0	45,9
Расходы и убытки разные	41,8	88,0	Доходы разные	6,4	6,8
ИТОГО	41,8	92,6		88,4	52,7
Чистая прибыль отч. года	46,6	—	Убытки отчетного года	—	39,9
БАЛАНС	88,4	92,6	БАЛАНС	88,4	92,6

Председатель прав. артели **Чиганаев.**
Главн. бухгалтер **Александров.**

Настоящий баланс рассмотрен и утвержден президиумом Чувашпромсоюза 22 марта 1941 года..

ХАЛĂХ ТĔН ÇИНЧЕН КАЛАНИ

Чее Йăван

(Халлап)

Пĕр ялта виççĕн пĕр тăван пурăннă. Пурнăçĕ вĕсен начар пулнă.

Пĕрре асли кутамкка çакать те, ĕç шырама тухса каять. Базарта кăна поп тĕл пулать.

— Мана тарçă кирлĕ. Кĕрĕшетĕн-и?—тесе ыйтать кунтан поп.

— Мĕн ĕçлемелли пур вара санăн?—тесе ыйтать кĕрĕшекен ача.

— Лаша пăхмалла та, вутă-шанкă кӳмелле,—тет поп.

— Хакне мĕн чул хуратăн?—ыйтать ача.

— Лаша тислĕкне кунсерен тасатса пырайсан, кашнинчех сана çĕршер тенкĕ тӳлесе пырăп. Тасатса пыраймасан, хăвăн çурăму тирпе çапуççи чĕнлĕх сӳсе илетĕп,—тет поп.

— Лаша тислĕкне мĕн тасатса çитереймесси пур,—шухăшлать ача.—Атя, кĕрĕшетĕп, тет.

Çапла калаçса татăлаççĕ те, каяççĕ поп патне. Поп хăйĕн килне кĕрсе каять, тарçине çитнĕ-çитменех витене ĕçлеме ярать.

Тарçă кĕрет те витене, çаннине тавăрсах ĕçе тытăнать. Анчах ĕçлет-ĕçлет, лаша тислĕкне нихепле те тасатса çитереймест. Тарçă тĕлĕнсе хытсах каять, поп лаши вĕçĕмсĕр çиет те, пĕрмай тислĕк кăларса тăрать.

Ир те пулать. Тарçă тислĕке тасатса пĕтерейместь. Кун ĕçне поп пăхма тухать.

— Ну, епле, тасатса пĕтертĕн-и? — ыйтать поп

— Эй, эпĕ кун пек лаша ĕмĕрпе курман. Тислĕкне ниçтан тасатса çитермелли çук,—тет тарçă.

Малтан килĕшнĕ тăрăх, поп кула-кула тарçăн çурăм тирне сӳсе илет те, хăйне ĕçрен кăларсах ярать. Вăл хуйхăрса килне таврăнать.

— Мĕн час таврăнтăн тата?—ыйтаççĕ килте юлнă тăванĕсем.

Асли хăйпе мĕн пулнине тĕпĕ-йĕрĕпех каласа кăтартать:

— Пĕр поп патне тарçа кĕтĕм те, лашин тислĕкне тасатса çитерейменшĕн, пĕтĕм çурăм тирне сӳсе илчĕ,—тет.

— Ну, эпĕ кайса пăхам тата. Эпĕ лучăрах майлаштараймăп-и?—тет те вăталăххи, вăл та ĕç шырама тухса каять.

Ку та тарçа çав поп патнех пырса çакланать. Анчах тислĕке тасатса çитерейменпирки, кăна та поп, аслине мăшкăл тунă пекех, асаплантарса кăларса ярать.

Юлашкинчен Йăван ятлă кĕçĕн тăванĕ поп патне тарçа кайса кĕрет. Йăван та поп каланипе пĕтĕмпех килĕшет.

— Юрать,—тет вăл попа.—Эсĕ сӳсе илĕн-и ман тире, эпĕ тăн кĕртсе хăварăп-и сана, курăпăр,—тесе шухăшлать хăй ăшĕнче.

Каç пулсан, Йăван лаша пăхма, вите тасатма тухса каять. Лаша малтанхи пекех пĕр лăшсăр тислĕк кăларса тăрать.

— Ай-яй, мĕн тăвас ку лашапа!—тет те Йăван, юман чукмартан пĕр тĕреклĕ пăкă касса илсе, лашана пăкăлать. Поп лаши тин, хырăмĕ кӳпсе кайнипе, çиме те, тислĕк кăларма та пăрахать. Вара Йăван витене хăпăл-хапăл!—тасатса тăкать.

Тул çутăлсан, поп каллех пăхма тухать. Шалт тĕлĕнсе каять, витере пĕр пĕрчĕ тислĕк çук, тап-таса.

— Ну, тавай çĕр тенкӳне!—тет Йăван.

— Чим, ытла час! Тепĕр ĕç хушмалла пулать сана,—тет те поп, арăмĕпе канашлама кĕрсе каять.

— Мĕн тăвас? Пĕтерет ку пире,—тет поп арăмне, тарăхса.

— Эсĕ ăна вăрмана вутта яр. Лашана ĕшентерсе килсен, укçине памалла мар ту,—тет арăмĕ.

Тепĕр кунне поп тухать те, Йăвана калать:

—Пирĕн вутă пĕтнĕ. Атя, вăрмана кайса вутă тиесе кил. Чиперех таврăнсан, сана тата çĕр тенкĕ парăп. Лашана айăп-мĕн тусан, çурăму тирне сӳсе илетĕп,—тет.

Йăван ирĕксĕрех килĕшет те, кĕсрене кӳлсе, вăрмана тухса каять.

Вăрманта Йăван вутта лаша çӳллĕш тиет те, килелле таврăнса тухать. Поп лаши, хуçи пекех чăхăмçăскер, пынă çĕртех ӳксе виленçи пулса выртать.

— Мĕн тăвас?—тесе шухăшлать Йăван —Вилнĕ-вилнех, тирне те пулин сӳсе каяс,—тет те, çĕçĕ кăларса, лаша патне пырать. Лаши çавăнтах, Йăван шухăшне сиссе, йăпăр-япăр сиксе тăрать. Йăван хăпарса ларать те лав çине, лашана хăвала-хăвала килне тĕрлеттерсе анчах пырса çитет.

— Ну, кăларса пар укçуна!—тет Йăван попа.

Поп хăранипе ăшăрхаса каять. Çавах та Йăвана мĕнле те пулин авас шухăшне пăрахмасть.

— Тавай тарар кунтан, матăшкă. Пĕтерет ку пире!—тет поп хăйĕн арăмне.

Пĕр михĕ сухари типĕтеççĕ те, Йăванран куç-пуç курми тарма хатĕрленеççĕ. Йăван çийĕнчех сисет çакна. Тарас умĕнхи каç вăл сухари михине кĕрет ларать.

Хĕвел тухнă-тухман поппа арăмĕ сухари михине йăтаççĕ те, килĕнчен тухса вĕçтере параççĕ. Кайсан-кайсан, пĕр шыв хĕррине канма лараççĕ.

— Хырăм выçрĕ ман. Çикелер мар-и пĕртак,—тет матăшкă.

Поп сухари михине салатать те, хай Йăван кусен умне ялт! сиксе тухать. Поппа арăмĕн куçĕсем улма пек чармакланса каяççĕ. Пăрахса тарасси те пĕтсе ларать.

Каç пулсан, кусен Йăванпа пĕрле выртса çывăрмалла пулать. Çыврас умĕн поппа матăшкă Йăвана çĕрле шыва тĕртсе яма калаçса татăлаççĕ. Йăвана шыв хĕррине вырттараççĕ, матăшкă варрине выртать. Анчах пурте çывăрса кайсан, Йăван поп вырăнне кĕрет те выртать.

Çĕрле матăшкă вăранать те, хăй çумĕнче упăшки выртать тесе, Йăвана аллипе кăшт! тĕртсе вăратать.

— Тĕртсе яр çавна шыва! Усалтан хăтăласси çавă пулĕ,—тет.

Йăван çавăнтах попа авăр тĕпне шампăр! тĕртсе ярать. Пĕтрĕ çăткăн поп!

Ирхине вăрансан матăшкă пăхать, хăй çумĕнче Йăван вырта парать.

— Ан вĕлерсем мана, Йăван! Ме пĕтĕм çумри укçана,—тесе йăлăна пуçлать матăшкă Йăвана.

Йăван илет те хăйне тивĕç укçана, харасланса килне таврăнать.

Йăвана курсан, икĕ пиччĕшĕ те аллисене—шарт!—çапса тĕлĕнеççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн —4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналĕн—5—23, «Ленин çулĕпе» журналĕн—0—85 издательство конторин—0—23.

НТ 2719. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР Заказ № 227. ф. 6. 58 84 п. л.